ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

8 (4422) №, 2015, февраль /нарăс/, 26
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ЧР ПУÇЛĂХĔН СТИПЕНДИАТКИ

## Ĕçре те, вĕренӳре те хастар пике

*Сивĕ хĕл çитет, çутă çу çитет,*
*Шухăш-ĕмĕт вĕт шав малалла.*
*Пар-ха аллуна, ман ташлас килет,*
*Мĕн пуласси пур – пурпĕр пулмалла.*
*Любовь Мартьянова.*



Вунпĕрмĕш класра вĕренекен Настя Калинина пур çĕрте те хастар. Çапах та уншăн вĕренӳ пĕрремĕш вырăнта.

– Настя вăл пирĕн пĕртенпĕрре! Унпа никам та танлашаймĕ. Республикăри олимпиада-ăмăртусенче те вăлах çĕнтерӳçĕсен йышне лекет. Ăслă та тавракурăмлăскер юрра-ташша та ăста. Нимĕнле уяв та пултаруллă пикесĕр иртмест. Аслă Çĕнтерĕве халалланă уявра сăвă вулакансен хушшинче те ăна çитекен пулмарĕ. Маттур вăл, пур çĕрте те ӳсĕмсемпе палăрать, – тет чăваш чĕлхине вĕрентекен Надежда Викентьевна Максимова хăпартланса.

Хастарлăхне кура ЧР Пуçлăхĕн стипендине те тивĕçрĕ Настя.

– Маншăн кĕтменлĕх пулчĕ ку. Ара, кунашкал хисеп малашне те ӳсĕмсем тума пулăшĕ. Умра – анлă çул... Ĕнтĕ кашни кун ĕмĕт-шухăшпа пурăнатăп. Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене ăнăçлă тытса аслă шкула вĕренме кĕресчĕ. Хăвăртрах алла пĕрремĕш ĕç укçи тытса курас килет. Ун чухне аннепе аттене парнепе савăнтарăп. Халĕ пушă вăхăт сахалтарах. Экзаменсене çине тăрса хатĕрленетĕп, – тет вĕренӳ отличници Настя Калинина.

...Настя чĕринче хăватлă кĕвĕ янăраса кайрĕ. Шавларĕç, кĕрлерĕç шалта, чун тĕпĕнче... Ку кĕвĕ ăна пурнăçра ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тума йыхăрчĕ...

– Савăннă чухне çутçанталăк та илемлĕ. Авă умра – йывăççем... Кашни вулли çутçанталăк скульптури. Тĕрлĕрен юмахри тĕлĕнтермĕш кĕлеткесене сăнарлаççĕ вĕсем. Тĕнче илемĕ – ĕмĕрлĕх япала! Ах, мана та çак илем пурнăçра хавхалану парнелетĕрччĕ, – терĕ Настя тавралăха тинкернĕ май.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*
Канаш хули,
11-мĕш шкул.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

ÇĔНĔ ĂРУ



## Кадетсем тупа турĕç

Нумай пулмасть Шупашкарти А.В.Кочетов ячĕллĕ кадет шкулĕнче пысăк та пĕлтерĕшлĕ уяв иртрĕ. Çак кун пиллĕкмĕш классемпе кăçал вĕренме кĕнĕ ачасем тупа турĕç. Ку Раççейри пĕтĕм кадетсен кунĕпе çыхăннă. Присягăра ачасем юратнă çĕршыва, тăван халăха сыхлама, вĕсене упрама, Тăван çĕршывшăн усăллă çын пулма тупа турĕç.

Мероприятие хăнасемпе вăрçă ветеранĕсем те йышлăн пухăнчĕç. Вăрçă паттăрĕсен çак кун салтак пăттине тутанса пăхма та май пулчĕ. Ăна шкулта хатĕрлерĕç. Тупа тунă хыççăн пиллĕкмĕш классем чиркĕве кайса пил илчĕç.

Уяв кăсăклă та ăнăçлă иртрĕ. Пурте кăмăллă юлчĕç.

***Алена МИХЕЕВА,***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.***

# Конкурсра çĕнтерĕр

### К.В.Иванов çуралнăранпа 125 çул çитессине халалласа К.В.Иванов произведенийĕсем тăрăх асăнмалăх маркăсăр почта открыткисен ÿкерчĕкĕсен «Константин Иванов тĕнчи» республика конкурсĕ

**Конкурс тĕллевĕ:**

– чăваш наци культурипе (поэзи, живопись, юрă-кĕвĕ тата ытти те) кăсăклантарасси;
– чăвашсен хăйне евĕрлĕхне, йăли-йĕркипе культура еткерлĕхне халăх хушшинче анлă сарасси;
– К.В.Иванов произведенийĕсене халăх хушшинче анлă сарасси;
– пултарулăх енĕсене аталантарма пулăшасси.

Йĕркелÿ комитечĕ Конкурса килнĕ ĕçсене пăхса тухать, çĕнтерÿçисене палăртать, чыслав церемонийĕ иртерет. Конкурс çĕнтерÿçисен ÿкерчĕкĕсенчен открытка хатĕрлесе кăларĕç, малти виçĕ вырăна йышăнакансене çĕршер открытка парĕç.

**Конкурс йĕрки:**

*1-мĕш тапхăр:* Ĕçсене 2014 çулхи ноябрĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи мартăн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
*2-мĕш тапхăр:* Ĕçсене 2015 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшĕччен тĕрĕслесе пĕтĕмлетеççĕ.

Конкурса хутшăнас тесен ĕçсене К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейне çак адреспа çитермелле:
**Шупашкар, Ленинград урамĕ, 29**
**(ĕç вăхăчĕ: 10.00-18.00 сехет, тел. 62-21-43).**

Ачасен ÿсĕмне кура конкурса хутшăнакансене виçĕ ушкăна уйăрма палăртнă:
1. пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тата ÿнер шкулĕсене валли:
– 7-11 çултисем,
– 12-15 çултисем;
2. Профессиллĕ ÿнер заведенийĕсенче вĕренекенсене валли.

**Ĕçсене пурнăçлас йĕрке**

Конкурса валли хатĕрлекен ĕçсене 200х300 форматлă хут çинче пурнăçламалла. Тăрăхла та, горизонталь майлă та ÿкерме юрать.

Ÿкерчĕке хуть те мĕнле илемлĕх мелĕ пулăшнипе тума юрать, çуллă тата янкăр сутă флуоресцент сăрăсене шута илмесен. Çырнисем пулмалла мар.

*Ĕçпе пĕрле конкурса заявка ярса памалла:*
– хутшăнаканăн хăйĕн çинчен кĕскен çырни: хушамат, ят, ашшĕ ячĕ; çуралнă кун, уйăх тата çул; пурăнакан тата вĕренекен вырăн; почта адресĕ (индекспа пĕрле); телефон; электрон адрес;
– автор хăйĕн аллипе: «Çак ĕçе (ячĕ) Конкурса тăратнă май эпĕ йĕркелĕçÿсене хамăн ÿкерчĕкпе реклама тата коммерци тĕлĕшĕнчен кирек хăçан та усă курма ирĕк паратăп», – тесе çырнă расписка пулмалла. Автор вунсакăр çул тултарман пулсан çакна ун ырăнне ашшĕ е амăшĕ çырмалла.

**Конкурса пĕтĕмлетесси тата çĕнтерÿçĕсене чысласси**

Ÿсĕме кура уйăрнă виçĕ ушкăнра та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш вырăнсене палăртаççĕ, çĕнтерÿçĕсен эскизĕсемпе маркăсăр открыткăсем кăларĕç. Çавăн пекех малти вырăна тухнă ĕçсене К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн куçса çÿрекен куравĕсенче кăтартĕç, ун хыççăн Чăваш наци музейĕнче упрĕç.

Чыслав 2015 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче иртет.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе тата çĕнтерÿçĕсен ĕçĕсемпе йĕркелÿçĕсен сайчĕсенче, çавăн пекех «Почтовый экспресс» тата «Утренняя почта» хаçатсенче паллашма пулĕ.

**Ыйтса пĕлмелли телефонсем:**
(8352) 62-21-43 (Ирина Вячеславовна Оленкина);
(8352) 62-01-78 (Надежда Михайловна Ярдыкова).

## Çуллă икерчĕ, капăрлатнă януарсем...

— Çăварни! Çăварни çитрĕ тинех! – шуйхашаççĕ Хутар клубĕ умĕнче пухăннă ачасем. Мĕн тери савăнăç ĕнтĕ вĕсемшĕн. Çуллă икерчĕ, капăрлатнă януарсем... Тата мĕн ырри пултăр-ха ача-пăчашăн?

Чăваш йăли-йĕркине упрамашкăн ял халăхĕ кашни çулах тăван халăх уявĕсене тĕплĕн хатĕрленсе иртереççĕ. Çăварни те вĕсен шутĕнче.

– Çак уява эпĕ кашни çулах чăтăмсăррăн кĕтетĕп, кăçал та çавах. Анне тул çутăлнăçутăлман тĕпелтен тутлă икерчĕ шăрши кăларать. Эпĕ те ирех тăратăп, урамра хăюсемпе, хăмпăсемпе, шăнкăравпа илемлетнĕ утсем чупа пуçласассăнах унта васкатăп.

Вара юлташсемпе çуна хыçне çунашкасем кăкарса яратпăр та ял клубĕ умне пурте пуçтарăнатпăр. Пире клуб ĕçченĕсем тутлă икерчĕпе хăналаççĕ, – савăнăçлăн каласа парать тăваттăмĕш класра вĕренекен Настя Данилова.

Утсем хатĕр. Икерчĕпе сăйлансан уявăн савăнăçлă пайĕ пуçланать ĕнтĕ. Клуб ĕçченĕсем концерт лартаççĕ, тĕрлĕ ăмăрту, конкурс иртереççĕ. Çĕнтерÿçĕсене парнесемпе саламлаççĕ. Унтан вара "çăварни карчăкне" çунтарса çултаlăкĕпех сывлăхлă пулма, усала сирме ыйтаççĕ. Питĕ савăнăçлă иртрĕ Хутар салинчи çăварни.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***



## Хаваслă уяв

Çăварни – чи хаваслă çурхи уяв. Çутçанталăк хĕл ыйхинчен вăранать. Сарă хĕвел ăшшăнрах хĕртме тытăнать. Хĕл сиввинчен йăлăхса çитнĕ çын хĕвел шевлипе савăнать. Çак илемлĕ кунсенче эпир çăварнипе сывпуллашрăмăр. Пирĕн шкул вĕренекенĕсем те çак уява чăтăмсăррăн кĕтрĕç. Кашни класс «çăварни карчăкне» ăсталанă.

Ачасем капăр тумсем тăхăнчĕç. Илемлĕ кĕвĕсемпе ташларĕç, юрă юрларĕç, вăйă выляррĕç. Мероприяти вĕçĕнче ачасене икерчĕпе, канфетпа, печенипе хăналарĕç. Уяв питĕ хаваслă иртрĕ. Вăл пурин кăмăлне те кайрĕ.

***Светлана ФЕДОТОВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
24-мĕш шкул.


## ĂШĂ САЛАМСЕМ

*Саламсене пĕлтермелли номерсем:*
**89876741833**
**89051975911**

Хаклă та юратнă аттене, **Герман Евгеньевич МИХАЙЛОВА,** юбилей ячĕпе тата Тăван çĕршыв хÿтĕлевçин кунĕпе чун-чĕререн саламлатăп! Паян та, ыран та, яланах сывлăх, телей, юрату, ăнăçу тата çителĕклĕ пурнăç сунатăп! Хальхи пекех ăшă кăмăллă, вайлă, ырă чунлă пулсам ялан!

Шупашкар.



*Хĕрĕ Настюша.*

Хаклă та юратнă çыннăма, Елчĕк районĕнчи Патреккел ялĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Владимир облаçĕнчи Ковров районĕ кĕрекен Пакино поселокĕнче салтак тивĕçне пурнăçлакан **Денис Борисович ДОБРОХОТОВ** рядовоя çуралнă кунĕпе чун-чĕререн саламлатăп! Савниçĕм, чи кирли, сывлăху яланах çирĕп пултăр! Çар службине ăнăçлă вĕçлеме сана вăйпа чăтăмлăх сунатăп. Ĕçÿсем кал-кал пулса пыччăр, нихăçан та пуçна ан ус! Нимĕнле хуйхă-суйхă та кăмăлна ан хуçтăр. Малашне те чунри тасалăхупа, ăш-пиллĕ кăмăлупа мана, хăвăн çывăх тусусемпе тăванусене савăнтарса пурăн! Çак савăнăçлă уяв кунĕнче эпĕ санпа юнашар пулмасан та манăн чĕрери юрату сана ăшăтасса шанатăп! Эсĕ салтакран таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтетĕп! Сана юрататăп, санпа мухтанатăп!

***Салампа Таня КАПИТОНОВА.***



**Тантăш**
*чăваш ачисен хаçачĕ*

**• УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**• ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

**• Редакципе издатель адресĕ:**
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

**• "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.**
**428019, Чăваш Республики,**
**Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.**

**• "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 56-00-23

**• ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР**
**В.В.ТУРКАЙ**

**• ТЕЛЕФОНСЕМ**

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

**• РЕДАКТОР**
**В.ФЕДОРОВ**

**• НОМЕР ВУЛАВÇИ**
**К.БАЙБАТОРОВА**

**• КАЛĂПЛАВÇĂ**
**Н.ПЕТРОВА**

**• ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

**• ТИРАЖ**
**1810 экз.**
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

**• ЗАКАЗ**
**№ 681**
Пичете февраль уйăхĕн 25-мĕшĕнче алă пуснă.

**• ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# «Салтак пăтти тутлă-и?» конкурс пĕтĕмлетĕвĕ

Хаклă вулаканăмăрсем! Акă «Салтак пăтти тутлă-и?» конкурса вĕçлеме те вăхăт çитрĕ. Эсир унта хастар хутшăнни пире питĕ савăнтарчĕ. Ярса панă ĕçсенчен чи лайăххисене суйласа илме те йывăртарах пулчĕ. Çапах та çĕнтерӳçĕсене палăртрăмăр. Вĕсем: **Верăпа Надя УСТИНОВĂСЕМ** (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ); **Диана МОИСЕЕВА** (Çĕрпӳ районĕ, Чурачăк); **Алина ВАЛЕРИАНОВА** (Шупашкар, 3-мĕш шкул); **Иван КИРИЛЛОВ** (Шупашкар районĕ, Çĕньял Покровски шкулĕ).

Конкурса хутшăнакансене пурне те тав тăватпăр! Çĕнтерӳçĕсене саламлатпăр! Яланах пирĕнпе пĕрле пулăр!

«Тантăш» хаçатра малашне те çĕнĕ конкурс, викторина пулĕ. Эсир те унта хутшăнăр, çĕнтерĕр!



*© Иван КИРИЛЛОВ (Шупашкар районĕ, Çĕньял Покровски) ӳкерчĕкĕ.*

# Суйлăр, çырăнăр, вулăр!

**Февраль уйăхĕн 26-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 7-мĕшĕччен «Хыпар» Издательство çурчĕн хаçат-журналне 2015-мĕш çулăн иккĕмĕш çурринче илсе тăмашкăн йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**

*Васкăр, юратнă кăларăмсене йӳнĕлле çырăнса юлăр!*

| Кăларăмсем | Индекс | Февралĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 7-мĕшĕччен | Мартăн 8-мĕшĕнчен | Перекет |
|---|---|---|---|---|
| ХЫПАР | Д4800 | 649,50 | 737,70 | 88,20 |
| ХЫПАР | Д8353 | 280,74 | 321,96 | 41,22 |
| Самраксен | Д4804 | 323,94 | 375,96 | 52,02 |
| [illegible] | Д1515 | 292,26 | 340,44 | 48,18 |
| [illegible] | Д1524 | 185,76 | 215,4 | 29,64 |
| Кил-çурт, хуçалăх | Д4806 | 165,30 | 192,66 | 27,36 |
| Хресчен сасси | Д4838 | 241,38 | 280,92 | 39,54 |
| Тăван Атăл | Д1529 | 267,36 | 319,08 | 51,72 |
| Капкăн | Д4608 | 134,58 | 161,52 | 26,94 |
| ЛИК | Д3429 | 116,32 | 140,36 | 24,04 |
| Вести Чувашии | Д4807 | 265,38 | 310,92 | 45,54 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | Д4847 | 612,24 | 743,58 | 131,34 |
| [illegible] | Д4802 | 222,18 | 256,92 | 34,74 |
| Самант | Д3208 | 150,90 | 181,02 | 30,12 |
| Тетте | Д3771 | 120,18 | 143,52 | 23,34 |

# Чĕвĕлти эсĕ, тăван чĕлхем!

Чăваш чĕлхин Пĕтĕм Раççейри «Чĕвĕлти чĕкеç» вăйă-конкурсĕ иртрĕ. Кăçалхипе вăл вуниккĕмĕш хут ачасене пухрĕ. Конкурса Чăваш Республикинчи вĕренекенсем çеç мар, Тутар, Пушкăрт Республикисенчи, Чĕмпĕрпе Самар облаçĕсенчи ачасем хутшăнни пушшех те савăнтарать.

Куславккари 3-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕсем çулсерен çак конкурсра хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслеççĕ, пултарулăхне кăтартаççĕ.

Калама çук тепĕр савăнăç вăл – конкурса хутшăнакансен йышĕ кашни çул ӳссе пыни. Иртнĕ çул пирĕн шкултан çак явапла ăмăртăва 121 вĕренекен хутшăннă пулсан, кăçал вара – 154 ача. Çиччĕмĕш класра пĕлӳ пухакансем уйрăмах хастар. Вăйăра панă ыйтусемпе ĕçсене ачасем тăрăшса çырчĕç. Кун пек чухне кăтартусем те лайăх пулмалла.

Конкурсăн ячĕ те «Чĕвĕлти чĕкеç» пулни ăнсăртран мар. Чĕкеç – илемлĕ, ырă вĕçенкайăк. Чăваш ăна мĕн авалтан хисепленĕ те кăмăлланă. Ваттисен сăмахĕсенче те ăна час-часах асăнаççĕ: «Чĕкеç ятлă пулмасан та чĕкеç чĕлхиллĕ пул теççĕ», «Чĕкеç йăвине ватакан çын ачисем селĕп пулаççĕ», «Чăваш чĕлхи – чĕкеç чĕлхи»...

Тăван чĕлхене ĕмĕр тăршшĕпех вĕренмелле тесе ахальтен каламаççĕ. Ăна пĕлни пурне те кирлĕ. Çакна пирĕн шкул вĕренекенĕсем асра тытнăранах, атте-анне пиллени чĕлхене юратнăран, хисепленĕрен савăнатпăр та.

***Валентина ЕФИМОВА, вĕрентекен.***

Куславкка районĕ,
Куславккари 3-мĕш шкул.

# Уроксем хыççăн

Паян уроксем хыççăн эпир класа тирпейлеме шут тытрăмăр. Кашни хăйĕн ĕçне пикенчĕ. Эпĕ доска çурăм, Саша вазăри чечексен шывне улăштарчĕ, вĕрентекен сĕтелĕ çинчи кĕнекесемпе тетрадьсене типтерлĕн майлаштарса хучĕ. Витя урай çурĕ.

Ĕçсене пĕтерсен пирĕн класс çуталса та илемленсе кайрĕ. Эпир малашне те ăна çапла таса тытма тăрăшăпăр. Тирпейлĕ класра вĕренме те кăмăллăрах-çке.

***Настя ТИМОФЕЕВА.***

Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.



*© Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ӳкерчĕкĕ.*

# Музыка шкулĕ – 95 çулта!



Кăçал Шупашкарти С.М.Максимов ячĕллĕ ача-пăча музыка шкулĕ 95 çулхи юбилейне паллă тăвĕ. Вăл Чăваш Республикинче çеç мар, Атăл тăрăхĕнчи регионсенче те чи ватти шутланать.

Унăн вĕренекенĕсем январьте иртнĕ IV Мускаври Ю.Н.Должников ячĕллĕ уçă конкурс-фестивальте вĕрсе тата çапса каламалли инструментсемпе выляса пултарулăхĕпе палăрчĕç. Куншăн шкул хаклă парнене тивĕçрĕ: «YamahaMusic» фирма 115 пин тенкĕ тăракан концерт флейтине парнелерĕ. Шкул ĕçченĕсем те, унăн çамрăк артисчĕсем те кăмăллă юлчĕç.

Хальхи вăхăтра С.М.Максимов ячĕллĕ музыка шкулĕнче 600 ытла ача вĕренет. Вĕсем фортепиано, халăх тата вĕрсе каламалли музыка инструменчĕсемпе выляма, пĕчченшерĕн тата хорпа юрлама хăнăхаççĕ. Çавăн пекех хĕлĕхлĕ музыка инструменчĕсене те калама вĕренеççĕ.

Чăваш Енри пĕрремĕш музыка шкулĕ 1920 çулта Ф.П.Павлов, В.П.Воробьев, С.Ф.Иванов чăваш композиторĕсем пуçарнипе уçăлнă. 1926 çултан ăна Степан Максимович Максимов композитор, педагог тытса пынă. Кайран шкул унăн ячĕпе хисепленме пуçланă. Унта хулари ачасене те, çывăхри районсенче пурăнаканнисене те илеççĕ. Çак шкултан республика тулашĕнче те пултарулăхĕпе палăрнă кĕвĕ ăстисем те чылайăн вĕренсе тухнă. Вĕсен йышĕнче В.Галкин валторнист, М.Измайлов кларнетист, Т.Воротников, Г.Степанов, С.Емельянов сĕрме купăссăсем, М.Шиков фаготист тата ыттисем те.

***Нина ОСИПОВА.***

# «Пĕтĕм тĕнчене парнелĕттĕм...»

**Лиза Жашковская хайĕн юлташĕсемшĕн яланах тĕслĕх вырăнĕнче. Кирек мĕнле ĕçре те пĕрремĕш ретре: тĕрлет, ÿкерет, ташлать. Хăй вăхăтĕнче Лиза шкул активĕн лидерĕ пулнă, паянхи куна вара курсри ушкăн старости.**



«Канма ĕлкĕрĕпĕр-ха», – шÿтлет Лиза йăл кулса. Çамрăклăх пĕрре кăна килет, иртекен вăхăта, шел пулин те, чарма çук. Çавăнпа та Лиза пур çĕре те ĕлкĕресшĕн ăнтăлать. Унăн шухăшĕпе вăй пур чух унпа пĕлсе усă курмалла. «Мухтани лайăх. Анчах унпа лăпланмалла мар, яланах малалла утмалла», – тет вăл хăюллăн. Ăнсăртран сиксе тухакан пăтăрмахсенчен те хăрамасть вăл. Вĕсем хĕрĕн пурнăçĕнче пĕрре кăна пулман. Математикăпа лайăх ĕлкĕрсе пыраканскере гуманитари предмечĕсене вĕренме йывăртарах килнĕ. Анчах та вăл пуç усман. Пушшех те тăрăшма пуçланă. Лиза мĕнле вĕреннине шкулта тахçанах аван пĕлнĕ. Вуннĕрмĕш тата хăй класĕнче математикăпа кирлĕ пек ĕлкĕрсе пырайман ачасене килте çак предметпа уроксем ирттерсе пулăшнă. Вĕсем экзамена пысăк балсемпе тытнишĕн хĕр халĕ те савăнать. Апла кунта унăн тÿпи те пур-çке!

Патшалăх экзаменĕсене ăнăçлă тытнă хыççăн темиçе аслă вĕренÿ заведенине те документсем панă хĕр. «Чылайăшĕнче йышăнчĕç, анчах татăклă юлашки утăм ниепле тăваймастăмччĕ. Журналист та, экономист та пулас килетчĕ. Педагогика институтне те, университета та çитрĕм. Аякри Королев хулинчи аслă шкула та мана йышăннине пĕлтерчĕç. Анчах та çывăх çынсенчен уйрăлас килменнипе унта каяс темерĕм. Юлашкинчен кооператив институчĕн экономика уйрăмне вырнаçрăм». Вĕреннĕ вăхăтрах Пăрачкав пики укçа-тенкĕ ĕçлесе илес тĕллевпе аниматор ĕçне кÿлĕннĕ. Пушă вăхăтра та ахаль лармасть Лиза. Темĕн тухлĕ ĕçрен уйрăмах вĕтĕ шăрçапа тĕрлеме кăмăллать: браслетсем, теттесем, кулонсем ăсталать. Час-часах Пăрачкавра хăйĕн ĕçĕсен куравне ирттерет, пултарулăхĕпе пурне те тĕлĕнтерет. Пурнăçра Лиза сăпайлă та лăпкă хĕр, сутă та ырă кăмăллă çын. Чăн-чăн тус. Хăйĕн чун ăшшине вăл пĕтĕм тĕнченех парнелеме хатĕр пуль... Ăшшăн шÿтлесе илме те, йывăр самантра канаш пама та пултарать. Унăн шучĕпе çыннăн ялан оптимист пулса, пур çĕрте те лайăх ен тупма, курма пĕлмелле. Пурнăçăн кашни кунĕпе савăнмалла, аптраса, хуйхăрса çÿрени çынна нимĕн те памасть. «Эсĕ пурнăçа йăл кулса йышăнатăн пулсассăн вăл та сана çапла тавăрĕ», – тет Лиза кăмăллăн. Хастар юлташăн сăмахĕсемпе эпĕ те килĕшетĕп. Кашни кунпа савăнса пурăнсан, нумайрах усăллă ĕç тума тăрăшсан пурнăç çамăл та çутăрах пулĕ.

*Иван ДЕРЮЖИН.*

## Тăван чĕлхе кунне халалласа

Чăваш чĕлхи! Епле илемлĕ
Вăл илтĕнет калаçура.
Мĕн пур чăваш çынни мухтанĕ
Çак чĕлхепе мĕн ачаран.

Чăваш чĕлхи вăл – пурнăç шывĕ.
Чăваш чĕлхи – хĕвел кулли.
Мухтав сана, чăваш çĕршывĕ!
Мухтав сана, чăваш çынни!

*Анна ВЛАДИМИРОВА.*

Вăрнар районĕ,
Мăн Явăш шкулĕ.

Чĕлхе – халăха сыхласа хăвармалли чи вăйлă хатĕр. 1999 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче ЮНЕСКО конференцийĕнче февралĕн 21-мĕшĕ – Тăван чĕлхе кунĕ тесе палăртнă. 2000 çулхи февральтенпе çак уява паллă тăвасси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Унăн тĕллевĕ – тĕнчери халăхсен хăйне евĕрлĕхне тата чĕлхе пуянлăхне сыхласа хăварасси. ЮНЕСКО хак панă тăрăх, тĕнчери ултă пине яхăн чĕлхерен çурри çывăх вăхăтра пачах та çухалас хăрушлăх пур. Çак куна çирĕплетни вара атте-анне пилленĕ чĕлхене юратма тата упрама çеç мар, ытти нацисен чĕлхипе те кăсăкланма май парать, халăхсен туслăхне çирĕплетет.

2003 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче ЮНЕСКО директорĕ К.Мацуура çапла палăртнă: «Мĕншĕн тăван чĕлхене пысăк тимлĕх уйăрмалла? Мĕншĕн тесен чĕлхесем этем пултарулăхĕн нумай енлĕхне кăтартса параççĕ. Ку вăл – хутшăну, йышăну, шухăшлав инструменчĕ, çавăн пекех эпир тĕнчене мĕнле курнине сăнлать, иртнипе пулассине çыхăнтарать. Чĕлхесенче ăнсăртран тухнă тĕлпулу йĕрĕсем, вăй илме пулăшнă тĕрлĕрен çăлкуçсем упранаççĕ. Этем çуралсанах тăван чĕлхе ăна палăрмалла витĕм курет, хăйне евĕр тĕнчекурăм парнелет. Кайран темиçе тĕрлĕ чĕлхе вĕренсен те унăн тĕнчекурăмĕ улшăнмĕ. Ют чĕлхене вĕренни вара этеме пурнăça урăхларах хаклама май парать».

**Любовь КУЛАГИНА** (Вăрнар районĕ, Вăрнарти 1-мĕш шкул) **сăнÿкерчĕкĕ.**



# Чăн-чăн пăхаттир!

«Сирĕн шкулта спортпа туслă ачасенчен кама палăртма пулать-ши?» – тесен тÿрех пурте Дима ятне асăнаççĕ.



Тăххăрмĕш класра вĕренекен Дима Петров спорта чунĕпе чăннипех те парăннă. Вăл унпа ачаранах кăсăкланать. Чылай ăмăртура çĕнтерÿçĕ ята тивĕçнĕ. Дима – шкулти футбол, волейбол, баскетбол командинчи ăста вылявçăсенчен пĕри. Çăмăл атлетикăра та çитĕнÿ нумай тунă. «Пурин валли те мĕнле вăхăт çитеретĕн?» – ыйтрăмăр каччăран вăл хăйĕн кăсăкланăвĕсене палăртма пуçласан. «Спорт – çирĕп сывлăх çăлкуçĕ. Ун валли манăн яланах вăхăт пур», – терĕ вăл кăмăллăн.

Халĕ ачасем пушă вăхăта ытларах компьютер е телевизор умĕнче ирттерни никамшăн та вăрттăнлăх мар-тăр. Дима вара кашни минута усăллă ирттерме тăрăшать. Уроксем хыççăн та Шăхасанти физкультурăпа спорт комплексне çул тытать вăл. Унта спорта кăмăллакансем валли ишев секцийĕ ĕçлет-çке. Унсăр пуçне кире пуканĕ йăтассипе те маттур. Турник çинче те çирĕм хут ытла туртăнма пултарать. Чăн-чăн пăхаттир!

Физкультурăпа спортра чун киленĕçне тупнăскер шкултан вĕренсе тухсан МЧС ĕçченĕ пулма ĕмĕтленет. Инкеке лекнĕ çынсене çăласси яваплă та пархатарлă ĕç пулнине пĕлсех тĕрлĕ спорт тĕсĕпе туслашнă Дима. Ара, унта вăй-хал нумай кирлĕ пулать-çке.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Канаш районĕ,
Атнаш шкулĕ.

# Йывăç – тымарĕпе, этем сывлăхпа çирĕп



Чăвашсем мĕн ĕлĕкрен сывлăха упрама тăрăшнă. Вăрман, уйхир, хуçалăх ĕçĕсене пĕтĕм вăй-халран тата чуна парса тĕплĕн пурнăçланă. Авалхи çынсем вăйлă, тĕреклĕ пулнă.

Юлашки вăхăтра пурнăçра тĕрлĕ улшăнусем пулса иртрĕç. Наукăпа техника, промышленноç аталаннă май этем сывлăхĕ те улшăнчĕ. Вăл çутçанталăкран аяккарах тăра пуçларĕ. Сывлăха çирĕплетмелли тĕрлĕ майсене сивлетпĕр хăш чухне, вăрмансене тĕлли-паллисĕр касатпăр, ўсен-тăрана пĕтерсе пыратпăр. Этем заводсемпе фабрикăсем кăларакан тĕтĕмпе сывлать, ют çĕршывран илсе килнĕ апат-çимĕç туянать, тĕрлĕ чирчĕрпе чирлет. Сывлăхпа çыхăннă çивĕч ыйтусене этемлĕхе пĕр çын пек кар тăрса шырама хистеççĕ. Çитĕнекен ăру пур енлĕн аталанасси вĕсен ашшĕ-амăшĕнчен те, вĕрентекенсенчен те, патшалăхран та килет.

Çамрăк ăру – пирĕн шанчăк, пуласлăх. Кашни çемье ачана йĕркеллĕ ўстерессишĕн тăрăшать. Вĕсене вăйхаллă, çирĕп сывлăхлă пулма вĕрентсе пырасси – пирĕн тĕп тĕллев.

Пирĕн те, педагогсен, тĕп тĕллев – çамрăксен сывлăхне упрасси, çирĕплетесси. Вырăс шкулĕнчи ачасене чăваш чĕлхи программипе сывлăха упрас енĕпе иртермелли уроксем пурри савăнтарать. Акă, сăмахран ултăмĕшсемпе çак темăсемпе уроксем ирттерме пулать: «Халĕ миçе сехет?», «Канмалли куна планлатпăр», «Хваттере тирпейлетпĕр», «Ăмăртмалла йĕлтĕрпе чупатпăр», «Сывлăхлă пулас килет-и?», «Сывлăх çинчен асаннепе калаçатпăр» тата ытти те.

Ачасене сывлăхлă пăхса ўстерес ĕçе ашшĕ-амăшĕпе вĕрентекенсем пĕр-пĕринпе çыхăнса, тĕллевсем палăртса, вĕсене куллен пурнăçласа пырсан çеç ăнăçу пулать. Унпа вара сывлăх яланах пĕрле юнашар.

Сывă ача ахаль лармасть. Вăл яланах мĕн те пулин тăвать: шашка-шахматла вылять, йĕлтĕрпе ярăнать, велосипедпа чупать, тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнать. Спортпа туслă çыннăн сывлăхĕ те çирĕп. Çирĕплĕхе аталантарас тесен чăтăмлă пулмалла. Чăтăмлăх çитĕнӳ патне илсе çитерет те ĕнтĕ.

«Сывлăх – çур пурлăх» – тенĕ ваттисем. Ăна мĕн ачаран упрамалла. Сывлăхлă çын кăмăл-сипетрен тарават пулать, хăйне йĕркеллĕ тытать...

Çирĕп сывлăхлă пулас тесен кун йĕркине пăхăнмалла: каçсерен пĕр вăхăтра çывăрма вырта ирхине пĕр вăхăтра тăмалла. Тепĕр кун хăш вăхăтра мĕн тумаллине палăртмалла. Килçуртра, вĕренӳ заведенийĕнче тасалăхпа йĕркелĕх хуçаланмалла. Кун йĕркипе ĕç йĕркине çирĕп туслаштармалла. Тĕслĕхрен, сĕтел хушшинче 40-45 минут ĕçлесе ларнă хыççăн 10-15 минут канмалла. Эпир, вĕрентекенсем, шкулта канупа хускану саманчĕсене уроксенче пурнăçлатпăр. Шел пулин те, кил-йышра компьютер умĕнче ларакан ачана никам та çакна аса илтермест. Пĕчĕккисен те, пысăккисен те ансат гимнастикăпа е хусканусемпе туслашмаллах. Унсăр пуçне пӳлĕме тăтăшах форточка уçса уçăлтармалла. Ачасене ирсерен физзарядка тума хăнăхтармалла. Хусканусем хыççăн кĕлеткене нӳрĕ алшăллипе сăтăрсан та усăллă.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă –  
Физзарядка тумалла.  
Пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр –  
Пирĕн пысăк пулмалла.  
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă –  
Физзарядка тумалла.  
Пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр –  
Пирĕн вăйлă пулмалла.  
Ирхине ирех тăратăп.  
Малтан вырăн пуçтаратăп.  
Физзарядка та тăватăп.  
Çӳç туратăп, çăвăнатăп,  
Унтан хăвăрт тăхăнатăп.

Ашшĕ-амăшĕ те ачисемпе физкультурăпа спорт çынна пур енчен те йĕркеллĕ те тĕрĕс аталанма пулăшнине аса илтермелле. Вĕсене шкулти физкультурăпа спорт мероприятине хутшăнма хавхалантармалла. Спорт занятийĕсене ирттерме кирлĕ япаласем – йĕлтĕр, ролик коньки, велосипед, спорт тумĕ туянса памалла. Паллах, туянса панипе çеç сырлахмалла мар – унпа усă курма та вĕрентмелле. Шывра ишме пĕлни те сывлăха çирĕплетет.

Анчах та вăл е ку хăнăхтарăва пурнăçланă чухне пур правилăна та çирĕп пăхăнса пыма хушмалла. Сăмахран, 4-7 çулти ачасене йĕлтĕрпе 15-20 минут, шкул çулĕнчи кĕçĕн ачасене 30 минут таран, вăтам шкул çулĕнчи ачасене 1-1,5 сехет çӳретмелле. Аслă классенче вĕренекенсене канмалла кунсенче йĕлтĕрпе ытларах çӳретме те ирĕк памалла.

Велосипедпа чупма, шывра ишме вĕрентнĕ, çавăн пекех тĕрлĕ мелпе кĕрешнĕ чухне те инкек-синкек пуласран ачасене куçран вĕçертмелле мар. Çул çинче çӳремелли йĕркене те аса илтермелле.

Ачасене хĕвелпе, уçă сывлăшпа тата шывпа усă курма хăнăхтармалла. Ку вĕсен шăм-шакне пиçĕхтерме, сывлăхне çирĕплетме пулăшать.

Ачасем шкулта çырнă «Спорт – манăн пурнăçра» сочиненирен илнĕ йĕркесем чуна пырса тивеççĕ: «Спорт пурнăçра пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать, вăл сывлăха тата кăмăл-сипете çирĕплетет... Эпĕ виççĕмĕш çул шкулти йĕлтĕрçĕсен секцине çӳретĕп. Кĕркунне эпир тĕрлĕ хускану тăватпăр, футболла та, волейболла та вылятпăр. Организма пиçĕхтеретпĕр. Хĕлле вара кашни кун уроксем хыççăн йĕлтĕрпе чупатпăр.

Эпĕ йĕлтĕрпе ултă çултан пуçласа ярăнатăп. Ун чух мана атте пĕчĕк йĕлтĕр илсе панăччĕ. Эпир аттепе хĕлле часчасах ярăнаттăмăр.

Йĕлтĕрçĕсен секцине вунпилĕк арçын ача, вунă хĕр ача çӳрет. Пурте çирĕп сывлăхлă пуласшăн. Пирĕн команда тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнать. Пĕрремĕш вырăнсене час-часах йышăнатпăр, хамăр çитĕнӳсемшĕн савăнатпăр.

Манăн туссем те, Димăпа Кирилл, спортпа туслă. Дима конькипе ярăнма юратать. Пирĕн девиз – «Хăвăн сывлăхна упра та çирĕплет».

Туссем, эсир те хăвăр сывлăхăра упрăр, çирĕплетĕр! Ан чирлĕр!»

Çакăн пек йĕркесен авторĕ спортпа чăнах та тусли куçкĕретех.

«Йывăç – тымарĕпе, этем сывлăхĕпе çирĕп», – тесе ахальтен каламан-çке.

***Любовь КУДРЯВЦЕВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
19-мĕш шкул.

# Юлташĕсемшĕн – тĕслĕх

Миша Новиков вуннăмĕш «б» класра пур предметпа та лайăх ĕлкĕрсе пырать. Уйрăмах биологи, алгебра, геометри урокĕсене кăмăллать. Унсăр пуçне Миша шкулта, республикăра иртекен чылай конкурса хутшăнать, ăмăртупа викторинăсенче тавракурăмĕпе ыттисене тĕлĕнтерет.

Арçын ача спортпа та туслă. Шкулти «Памирка» туристсен, «Орлята» çарпа патриот клубĕсене те хаваспах çӳрет. Пĕрле вĕренекенсем ăна хисеплеççĕ. Миша пуринпе те çăмăллăнах пĕр чĕлхе тупать. Учительсен сăмахĕсене яланах тимлĕн итлет, хушнине тӳрех пурнăçлать.

Вăл сывă пурнăç йĕркине тытса пырать: спортпа туслă, тусĕсене те унпа туслашмалла тет. Юлташĕсем те унран тĕслĕх илеççĕ. Миша тăтăшах предмет олимпиадисене, спорт ăмăртăвĕсене тухса çӳрет. Çĕнтерӳпе таврăнни пĕрре мар пулнă. Ытларах вăл ОБЖ предмечĕпе иртекен олимпиадăра палăрчĕ. Виçĕм çул та, пĕлтĕр те, кăçал та призерсен йышĕнче. ГТО нормативĕсене пурнăçласа вара кĕмĕл значока тивĕçрĕ.




Нумай пулмасть шкулта спорт, патриот, массăллă хӳтĕлев ĕçĕсен уйăхĕпе килĕшӳллĕн юрăпа строй смотрĕ иртрĕ. Унта саккăрмĕш-вуннăрмĕш классем хутшăнчĕç. Çамрăк армеецсем стройпа утса, строй юррисене юрласа тупăшрĕç. Миша та ку мероприятирен юлмарĕ. Ыттисемпе пĕрле хастарлăхне кăтартрĕ.

Çĕнтерӳçĕ ятне вуннăмĕш «а» класс тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăна вуннăрмĕш «а» тата «б», виççĕмĕшне тăххăрмĕш «а» классем тухрĕç.

***Елена КОШКИНА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
37-мĕш шкул.

Илья КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕ.

# Спортпа туслă саккăрмĕшсем

Пирĕн шкулти саккăрмĕш «б» класра вĕренекенсем спортпа питĕ туслă. Вĕсем шкулта, районта, республикăра иртекен ăмăртусене хаваспах хутшăнаççĕ. Максим Агилов, Володя Волков, Павел Бурашников, Андей Табаков кашни çулах Пĕтĕм Раççейри чупу кунĕнче, «Йĕлме йĕлтĕр» тата «Çĕнĕ çул йĕлтĕрĕ» ăмăртусенче те хăйсен вăйхалне тĕрĕслеççĕ. Çуллахи кану лагерĕнче ирттернĕ тĕрлĕ ăмăртура Андрей чупассипе те, турник çинче туртăнса çĕкленессипе те палăрчĕ. Вăл шкулта та иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Дима Туптов чылай çул ĕнтĕ республикăри дзюдо тата самбо турнирĕсенче малтисен йышĕнче. Вăл тĕрлĕ категориллĕ виçепе (55-65 кг) кĕрешсе темиçе хут та çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕ. Тăрăшуллăскерсене малашне те çитĕнӳсем сунатпăр.

***Любовь КУДРЯВЦЕВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
19-мĕш шкул.

# Сирĕн урам ячĕ

## Тĕлĕнтермĕш куравра

**Кĕçех Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитет. Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçи, унăн салтакĕсем çинчен ытларах пĕлес тесе Шупашкарти 12-мĕш шкулта 4-мĕш класра вĕренекен Анастасия Смеловăпа Евгений Угольников пирĕн хулари урам ячĕсене тĕпчеме шут тытрĕç: чăваш çĕрĕн паттăр ывăлĕсене – Совет Союзĕн Геройĕсене – халалланисем пур-и?**



Ачасем пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç: Наци библиотекинче кивĕ хаçатсемпе журналсен тĕркисемпе паллашрĕç, Шупашкар карттине тишкерчĕç, В.И.Чапаев тата Çар мухтавĕн музейĕсене çитсе курчĕç, хула администрацийĕнчен урам ячĕсене улăштарни çинчен çирĕплетекен хутсене ыйтрĕç, Совет Союзĕн Геройĕсен ятне панă сакăр урама çитсе курчĕç, вĕренекенсене «Совет Союзĕн Геройĕсем – Чăваш Ен ывăлĕсем» анкета ыйтăвĕсене хутшăнтарчĕç.

Амăшĕсемпе Руслана Александровна Угольниковăпа Елена Ефимовна Смеловăпа пĕрле вĕсем çакна палăртрĕç:

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине Шупашкартан 13632 çынна вăрçа чĕнсе илнĕ, унтан вара 8594 таврăннă;

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче (1941-1945 çç.) Чăваш Енĕн 65 ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ ята тивĕçнĕ;

– паянхи кун Шупашкарта 485 урам, вĕсенчен 40 яхăн урама 1941-1945 çулсенчи паллă пулăмсене е паттăрсен ячĕсене халалланă;

– анчах сакăр урамĕ çеç Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин Геройĕсен ячĕсене илнĕ.

Вĕсем: А.Я.Анисимов, А.Н.Боголюбов, В.П.Винокуров, А.В.Кочетов, Ф.Н.Орлов, А.М.Осипов, М.А.Сапожников тата В.И.Уруков урамĕсем.

Февралĕн 12-мĕшĕнче, Наци музейĕн çуралнă кунĕнче, тăваттăмĕш «а» класс ачисем Людмила Салмина тата Зинаида Максимова вĕрентекенсем ертсе пынипе хăйсен тĕпчевĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарчĕç. Музее вĕсем икĕ хуçланакан курав («Совет Союзĕн Геройĕсем» тата «Вĕсен ячĕсенче – истори страницисем») тата вăрçă паттăрĕсене халалланă сакăр папка парнелерĕç.

Музей хăнисенчен пĕри, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Н.Г.Морозов хуçланакан кураври сăнӳкерчĕксенчен пĕринче хăйĕн командирне А.Н.Боголюбова палласа илчĕ. Ачасемшĕн ку чăн-чăн кĕтменлĕх пулчĕ. Хăйсен ĕçĕ курăмлă пулнишĕн вĕсем питĕ савăнчĕç! Тата, паллах, нумай шухăшласа тăмасăрах ветерана класс сехетне йыхравларĕç.

**Илья КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕ.**

## Йытă çури

*Чăн пулни*

Кун каç еннелле сулăнчĕ. Йытă çури паян çурт умĕнче хуçине кунĕпех кĕтсе ларчĕ. Кун пекки пĕрре кăна пулман-ха. Вăл килне кĕрет те йытă çури ăна чăтăмсăррăн кĕтет. Хуçи ăна тухса ачашлать, тутлине çитерет. Анчăка çав кăна кирлĕ. Вăл ăслă та шанчăклă куçĕсемпе хуçине сăнать, хӳрипе вылятать, йĕри-тавра сиккелесе çаврăнать...

Паян вара хуçи çук та çук. Канăçне çухатнă йытă çури унталла-кунталла чупкалса та пăхрĕ, йынăшкаларĕ, кăштах ӳлесе те илчĕ. Тен, хуçи ăна асăрхамасăр тухса та кайрĕ пуль тесе шутларĕ. Анчах ку шухăша вăл часах пăрахăçларĕ. Иртен-çӳрен çынсем çине пăхма пуçларĕ. Урамра таттисыпписĕр машина, йытти те, кушакки те чупать. Йытă çури вĕсене асăрхамарĕ. Вăл таврара пĕр шăршламан кĕтес те хăвармарĕ, анчах чуна çывăх çыннăн шăршине ниçта та туймарĕ.

Сасартăк вăл хăйне такам тимлĕн те сиввĕн сăнанине сисрĕ. Вăрăм пӳллĕ те кăнттамрах арçын иккен. Унтан бензинпа темле усал шăршă кĕрет. Йытă çури аяккалла тапса сикесшĕнччĕ, анчах йывăр пушмак пуçĕ аякне хыттăнах пырса лекрĕ. Тавралăх хура тĕспе хупланчĕ, куçĕнчен вут-хĕм сирпĕнчĕ. Арçын хаяррăн мăкăртатса малалла сулланчĕ.

Суран тĕлкĕшсе ыратнине чăтаймасăр йытă çури йынăшса ячĕ, сывлăшĕ те пӳлĕнчĕ унăн. Кĕтессе лăпчăнса ларса ыратакан тĕле çулама пуçларĕ. Пушмак лекнĕ вырăн чарăнми ыратрĕ. Пĕр вăхăт куçне хупса тавралăха итлесе выртрĕ вăл. Юнашарах çынсем иртсе çӳреççĕ. Сайра-хутра ун çине те пăхса илеççĕ: пĕрисем шелleççĕ, теприсем курман пек пулаççĕ, ача-пăча ачашласа та пăхать. Йытă çури вĕсем çине пăхмарĕ те. Хуçи тупăнманни ăна çаплах канăç памарĕ. Тен, вăл ун хыççăн чупса пынине асăрхаймарĕ-ши?..

Урисем çине пуçне хурса тĕлĕрсе илчĕ çура. Иртнĕ пурнăçĕ куçĕ умне тухса тăчĕ: акă аппăш-пиччĕшĕпе амăшĕн сĕтне ĕмет; хуçи апат çитерет, унăн ывăлĕ йытă çурипе вылять. Часах вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрчĕç: кашнине пĕлĕшĕсене парса ячĕç, килте ăна çеç хăварчĕç. Пурте юратрĕç, ачашларĕç çурана. Хуçан кашни сăмахне итлерĕ вăл, мĕн хушнине йăлт пурнăçларĕ. Сывлăхĕ çирĕп, урисем патвар, кĕлетки те хитре. Ăратлă йăхран терĕç ун пирки...

Йытă çури чунĕ кӳтнипе вăрăммăн ӳлесе ячĕ. Ăна урампа иртсе пыракан çыннăн хаяр сасси чарчĕ. Тавралăх тĕттĕмленчĕ. Вăл çӳçенсе илчĕ. Кĕркуннехи вичкĕн сивĕ çил хулан пушă урамĕсенче хуçаланать. Хуçланса выртрĕ те пĕр вăхăт кичем урама тĕмсĕлсе пăхса выртрĕ. Хула ыйха путрĕ. Суранпа хуйхă канăç памарĕç ăна. Ăçта-ши хуçи? Йăлтах йĕркеллĕ-ши? Яланах ачаш сăмахсемпе çеç чĕнекенскер ăна манчĕ-ши вара? Йытă çури шутларĕ, шутларĕ, анчах хуравне тупаймарĕ...

Майĕпен çутăла та пуçларĕ. Урам машинăсемпе, хĕвĕшекен халăхпа тулчĕ. Йăлтах ĕнерхи пек. Каллех алăк уçăлчĕ. Хуçи пуррипе çуккине пĕлес тесе анчăк уçă алăка пуçне те чикнĕччĕ – урай çăвакан хĕрарăм ăна йĕпе мунчалапа çапрĕ те урама кăларса ывăтрĕ.

Чăтма çук апат çиесси килнипе хырăмĕ пăчăртанса илчĕ йыттăн. Иртсе пыракан старикĕн сумкинчи тутлă çăкăр шăрши анратсах ячĕ ăна. Вăл ун хыççăн чупрĕ. Старик çаврăнса та пăхмарĕ. Кайран хĕрарăм, арçын ача, хĕрача хыççăн чупса пăхрĕ... Аякка кайма та хăрарĕ. Тен, хуçи тухĕ те унсăрах кайĕ. Анчах ăна ниепле те кĕтсе илеймерĕ мĕскĕн...

Кăнтăр хыççăн асламăшĕпе мăнукĕ ун çумĕнченех иртсе пычĕç. Мăнукĕ йытă çури çине шеллесе пăхса илчĕ те асламăшне темĕн каларĕ. Вĕсем ăна канфет ывăтса пачĕç. Йытă çури ăна тӳрех çăтса ячĕ. Ватă хĕрарăм вафлине те шеллемерĕ. Ăна та çирĕ. Вĕсем калаçса иртсе кайрĕç. Кĕтмен çĕртен мăнукĕ çаврăнчĕ те çурана пĕрле чĕнчĕ. Йытă çури хуçи куллен тухакан алăк çине тунсăхлăн пăхса илчĕ те вĕсем хыççăн сиккипе чупрĕ. Çĕлăнăç, çĕнĕ хуçа, пуласлăх йытă çурин чĕринче ырă шанчăк çуратрĕç.

***Юлия НИКОЛАЕВА.***

## Аслă поэтăмăра халалласа



«Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса...»

Мĕн ачаранпа асра юлнă йĕркесем паянхи кун та кашнин асĕнчех. «Нарспи» – ачасем те, аслисем те юратса вулакан хайлав. Поэмăри кашни йĕрке çунатлă сăмах пек илтĕнет. Унта хĕпертени-савăнни, тарăхни-хăрани те – пурте пур. Константин Ивановăн «Нарспи» поэмине эпир пĕр иккĕленмесĕрех чăваш литературин ылтăн çӳпçине ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă поэма тесе калама пултаратпăр. Поэта, унăн ĕçне паян та пысăк хак параççĕ. Çак ырă йăла ĕмĕрлĕхе тăсăласси паллă ĕнтĕ. Кăçал «Нарспи» поэма авторĕ çуралнăранпа 125 çул çитет. Константин Васильевич Ивановăн культура тупри тĕнче пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе тата ун ятне ĕмĕрлĕхех асра хăварас, халăха литературăпа туслаштарас тĕллевпе республикăра 2015 çула ун ятне халалланă. Çавна май ятарлă мероприятисем ирттерме палăртнă.

Нумаях пулмасть Шупашкарти А.Г.Николаев космонавт летчик ячĕллĕ 10-мĕш шкулта Раççейри Литература тата республикăри К.В.Иванов çулталăкĕсене уçрĕç. Çак куна чăваш чĕлхи учителĕсемпе шкул хастарĕсем тăватă тапхăртан тăракан программа хатĕрленĕ.

Савăнăçлă уява 10-мĕш шкул директорĕ Светлана Владимировна Кумалькова уçрĕ. Хăйĕн калаçăвĕнче вăл К.В.Ивановпа мăнаçланнине, поэтăн литературăри пĕлтерĕшне палăртса хăварчĕ.

Ачасем умĕнче чăваш чĕлхи учителĕсен ассоциацийĕн ертӳçи, ЧНК президиумĕн пайташĕ, ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ Геронтий Лукиянович Никифоров К.В.Ивановăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ çинчен каларĕ. К.В.Иванов чăваш литературине пуçарса яраканĕ пулнине палăртса хăварчĕ. Кăçал çавăн пекех М.Ю.Лермонтов çуралнăранпа 200 çул çитет. Çавна пула Геронтий Лукиянович вырăссен паллă поэчĕ, проза ăсти, драматург çинчен каласа пани питĕ вырăнлă пулчĕ.

Концертра ачасем К.В.Ивановăн «Нарспи» поэма сыпăкĕсене вуларĕç. 6 «р» класри Данил Зайцев чăваш юррисемпе куракансен кăмăлне çĕклерĕ. 5 «г», 7 «в», 8 «в» классенче вĕренекенсем Н.Маркова, Д.Субботина, О.Дмитриева, А.Рыбицкая, Е.Прохорова, А.Шомахова та хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

К.В.Иванов çулталăкне халалланă мероприяти çитĕнекен ăрăвăн культурине ӳстерме, çĕршывăн историпе культура туприне сыхласа хăварма тата Чăваш ен илĕртӳлĕхне кăтартма май пачĕ.

***Анастасия ВЛАДИМИРОВА.***

# Йывăр пулсан та чăтнă

**Тăван çĕршывăн Аслă, Афганистан, Чечен вăрçисем мана яланах кăсăклантаратчĕç. Шырамалли, пĕлмелли нумай пек туйăнать. Шел те, эпир, хальхи çамрăксем, çав вăрçăсене хутшăннисен чылайăшĕн ятне-шывне те пĕлместпĕр.**

Юрий тата Валерий Ельмовсем интернационалист салтаксем çинчен тĕплĕнрех пĕлес тĕллевпе вĕсен килĕсене çитсе курма шут тытрăмăр, çар паттăрĕсемпе калаçас терĕмĕр. Çак тĕллеве пурнăçлама инçетрен янă çырăвĕсене тупрăмăр, сăнӳкерчĕкĕсене пăхрăмăр, наградисем пирки ыйтрăмăр, тĕрлĕ документпа паллашрăмăр, салтаксен çемье пурнăçĕпе те интереслентĕмĕр.

Афганистан... Афган вăрçи... Ку çĕршыв паян та пăлхавлă, вăрçă-харçăллă регионсен шутĕнче. Америкăн хĕç-пăшаллă çарĕсем терроризмăн йăвине аркатма пуçланă операцие çаплах вĕçлеймеççĕ-ха. 1979-мĕш çулхи декабрь вĕçĕнче Совет Союзĕ те кунти çивĕчленсе çитнĕ лару-тăрăва çăмăллатас тĕллевпе сывлăш çар вăйĕсене илсе кĕнĕ. Вунă çула яхăн пынă юнлă хирĕç-тăрăвăн вут-çулăмĕ витĕр пилĕкçĕр çирĕм ултă пин совет салтакĕпе офицерĕ тухнă, вунпилĕк пин те вунпиллĕкĕшĕ тăван кĕтесне тупăксенче таврăннă, алă тăвату пин салтак йывăр аманса ĕмĕрлĕхех сусăрланса юлнă, тăватçĕр вунултă пинĕшĕ чирлесе таврăннă.

Салтака каясси – кашни çын тивĕçĕ. Çавăнпа та эпир Юрий Николаевичпа Валерий Ивановича çакăн пек ыйту патăмăр: «Сире салтак пурнăçĕ мĕне те пулин вĕрентрĕ-и?» Иккĕшĕ те шухăшланă хыççăн сăмах çăмхине тăсса ячĕç: «Кашни каччăн салтакра пулмалла. Халĕ пирĕн вăхăтри пек службăра икĕ çул мар, çулталăк çеç тăмалла. Çапах та çарта чухне пурнăç илемне тата çывăх çынсене хаклама вĕренетĕн».

Юрăпа Валера иккĕмĕш сыпăкри тăвансем çеç мар, вĕсем пĕр урамри, пĕр класри юлташсем те. Шкул хыççăн Çĕмĕрлери ДОСААФ шкулĕнче вĕреннĕ, водитель правине илнĕ. 1981 çулта ытти çамрăксемпе пĕрле çар хĕсметне лекнĕ. Малтанах хăнăхма йывăр пулнă. Маршпа утма, вырăнта тăма тата стройран тухма тӳрех лайăх пулмасть, анчах каччăсем тăрăшнă, Хĕрлĕ Чутай ятне яман. Иккĕшĕ те автомобильпе техника тĕлĕшĕнчен тивĕçтерекен батальона лекнĕ.

Мартăн 31-мĕшĕнче салтаксене Афганистанри Кабул хулине илсе кайнă, техника шанса панă. Кабултан Термез хулине строительство материалĕсем, апат-çимĕç турттарнă. Темле йывăр пулсан та чăтнă, ахлатман. «Салтак пурнăçĕ çинчен нумай каласа пама пулать, пĕтĕмпех çырса пĕтереймĕр», – тесе шӳтлекелеççĕ икĕ тус пĕр-пĕрин çине пăхса. Салтакран та пĕрле таврăннă вĕсем. Кайран вара çулĕсем уйрăлнă.

Юра Шупашкар хулине пурăнма куçать, милици хуралĕнче тăрăшать. Çапах та чунĕ тăван ялах туртать. Çемьере кĕçĕнни-çке. Мăшăрĕпе тата хĕрĕпе Наташăпа тăван килне таврăнать. Ялти Культура керменĕнче вунвиçĕ çул ĕçлет. Купăс каласа чипер юррисемпе ял çыннисене мĕн чухлĕ савăнтарман пуль! «Афганистан» юрра вара кашнинчех чун ыратăвĕпе юрланă. Ара, юлташĕсенчен нумайăшĕ унтан таврăнайман-çке. Пурнăçра тем те пулать. Шăпа ăна Мускав хулине илсе çитерет. Унта тăватă çул ĕçленĕ хыççăн тăван ялах ватă амăшĕ патне таврăнать.

Валерăна вара пурнăç кустăрми Воркута хулине илсе çитерет. Вăл унта вунсакăр çул шахтăра ĕçлет. Пуриншĕн те паллă, ку йывăр ĕç. Çапах тăрăшулăхпа палăрнă, тав сăмахне те чылай тивĕçнĕ. Пенсие тухсан яла таврăннă. Верăпа çемье çавăрнă. Капмар, икĕ хутлă çурт туса лартнă, ывăл çитĕнтернĕ, авлантарнă. Тăван ялĕнче мăнукĕпе Матвейпа савăнса пурăнаççĕ. «Эсир хальлĕхе салтак мар-ха, анчах пулас хӳтĕлевçĕсем. Сирĕн чунăрпа салтак пулмалла», – терĕç вĕсем пире.

Эпир интереслĕ калаçушăн тав туса хаваслă кăмăлпа килсене салантăмăр.

***Владимир МИШИН, Дмитрий ШАЛТАЙКИН,* 9 класс.**

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

**ÇЫРАВÇĂСЕМ – АЧАСЕМ ВАЛЛИ**

# Кама мĕн кирлĕ?

## Виталий Енĕш юмахĕ тăрăх çырнă пьеса

**ВЫЛЯКАНСЕМ:**
***Чапрас упа, Михала пичче***
***Пакша***
***Чĕрĕп***
***Мулкач***
***Хăнтăр***
***2-мĕш Упа***

*Уçланкăри тунката çинче Упа-утаман ним ĕçлеме аптраса ĕнсине хыçса ларать. Уçланка хĕрсех кăмпа татакан пакша кĕрет.*



ПАКША. Эй, Михала пичче, хĕл çывхарнă чух çапла лармалла-и?

УПА *(тĕлĕнсе)*. Мĕн тăвас-ха ман?

ПАКША. Ара, хĕле хатĕрлен. Курмастăн-им, эпĕ кăмпа пуçтаратăп…

*Пакша кăмпа пуçтара-пуçтара тухса каять. Упа тăрать те кăмпа пуçтарма пуçлать. Кăмпа татать те турат çине пакша пек тирет, татать те – тирет. Çав вăхăтра уçланка Чĕрĕп васкаса кĕрет. Кăмпа пуçтарать. Упана асăрхать.*



ЧĔРĔП. Ырă кун пултăр, Михала пичче. Мĕн тăватăн?

УПА *(кăрăça турат çине тирсе)*. Хĕле хатĕрленетĕп.

ЧĔРĔП. Хей, ан култар, Михала пичче. Хĕле çапла хатĕрленеççĕ-и вара? Ăна ак çапла, ман пек хатĕрленмелле!

*Чĕрĕп йăпăр-йăпăр çулçă пуçтарса чупкалать. Тухса каять. Упа çулçă пуçтарма пуçлать. Унта пĕр купа, кунта тепре купалать. Шăп çав вăхăтра Мулкач сиксе кĕрет.*

*Упана асăрхать.*

МУЛКАЧ. Чим-ха, чим, Михала тусăм, мĕн тăватăн капла?

УПА *(мăнкăмăллăн пуçне çĕклесе)*. Курмастăн-им, хĕле хатĕрленетĕп.

МУЛКАЧ *(малти урисене хире-хирĕç шарт çапса)*. Эй, ан тĕлĕнтер, хĕле çапла хатĕрленмелле-и вара? Чуптар халех уя, унсăрăн ял ĕçченĕсем кишĕре пĕтĕмпех кăларса пĕтереççĕ.



*Мулкач васкаса тухса каять. Упа хире чупать, кишĕр кăларса тултарать те çĕклемпе вăрманалла утать. Ăна хирĕç вут-шанкă йăтнă Хăнтăр тухать.*

УПА. Хăнтăр тусăм, мĕн ĕçлетĕн?

ХĂНТĂР. Эсĕ ху мĕн тăватăн?

УПА. Курмастăн-им, хĕле хатĕрленетĕп.

ХĂНТĂР. Тьху! Тӳррĕн каланăшăн ан çиллен те, Михала пичче, çурмаккай пуль эсĕ. Мĕн тума кирлĕ сана кишĕр хĕлле? Кала, мĕн тума? Э? Ман пек хатĕрленмелле ăна!

*Хăнтăр туратсене сĕтĕрсе юхан шыв еннелле тухса каять. Упа пуçне хыçса тăрса юлать. Тунката çине пырса ларать.*

УПА *(çăвар карса, анасласа)*. Хырăм та выçрĕ, çывăрас та килет.

*Çав хушăра тепĕр Упа кĕрет. Хăй пит мăнтăр.*

2-МĔШ УПА *(тĕлĕнсе)*. Михала, эс мĕн туса ларатăн кунта?

УПА *(ура çине тăрса)*. Хĕле хатĕрлене-хатĕрлене ывăнтăм та канма лартăм.

2-МĔШ УПА *(Михала патне пырса, икĕ аллине сарса)*. Эх, Михала, Михала. Сан хĕле çапла хатĕрленмелле-и вара? Хĕлле эс çывăратăн вĕт, мĕне кирлĕ сана кăмпа, çулçă, кишĕр. Пыл, çырла çисе çу пухмалла санăн. *(Хăйĕн аякĕсене, хырăмне кăтартать).* Хăвăн пуçупа *(çамкине чăмăрĕпе шаккаса)* шутламалла ăна, ыттисем хыççăн каймалла мар. Эх, Михала, Михала. Атя, кайрăмăр, вăрентĕп сана хĕле тĕрĕс хатĕрленме.



Иккĕшĕ те тухса каяççĕ.

**Чаршав.**

***Наталья МИРОНОВА,* Шупашкарти 7-мĕш ача сачĕн чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.**

*© Кристина* **ВАСИЛЬЕВА** (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ӳкерчĕкĕсем.*

КĂСĂКЛĂ

# Ани шурă, вăрлăхĕ хура



◊Тĕнчери чи паллă çыравçă тесе Агата Кристие палăртнă. Унăн 78 произведенине 44 чĕлхене куçарнă. Пурĕ 2 миллиарда яхăн экземпляр сутăннă.



◊Чи пысăк кĕнеке – «Сборник морских правил». Вăл Амстердамра упранать. Унăн çӳллĕшĕ – 2 метр, сарлакăшĕ – 1 метр, хулăнăшĕ – 1,5 метр.




◊2002 çулта Гиннес рекорчĕсен кĕнекине чи пĕчĕк кĕнекене кĕртнĕ. Ăна вырăс ăстаçи хатĕрленĕ. Кăларăм калăпăшĕ – 0,9Ч0,9 мм. Унта Антон Павлович Чеховăн «Хамелеон» калавĕ пичетленнĕ.



◊Тĕнчери чи йывăр кĕнекесенчен пĕри – «Кодекс гигас». Ăна çавăн пекех «Библия дьявола» ятпа та пĕлеççĕ. Халăхра çӳрекен халап тăрăх, ăна чех монахĕ пĕр каç хушшинче шуйттан хăй пулăшнипе çырнă. Алçырăвăн йывăрăшĕ – 75 килограмм.



◊Тĕнчери чи хаклă кĕнеке – «Лестерский кодекс» (е «Трактат о воде, земле и небесных телах»). Унăн авторĕ – Италин паллă ӳнерçи тата изобретателĕ Леонардо да Винчи. Ăна кĕнеке пек те мар, шухăшлавçă ĕçĕсен тетрачĕ пек те хаклаççĕ. Леонардо да Винчи унта тĕнче тытăмĕ пирки хăй мĕн шухăшланине çырса пынă. Тепĕр кăсăклă самант: кĕнеке пĕр-пĕринпе çыхăнтарса çирĕплетнĕ 18 пергамент страницинчен тăрать; мĕн çырнине вара тĕкĕрпе усă курсан çеç вулама пулать.

Халĕ хаклă тупра Билл Гейтс аллинче. Кĕнеке хакĕ 30,8 миллион долларпа танлашать.




◊Чи анлă сарălнă кĕнеке – Библи. 1815–2000 çулсенче унăн 4 миллиарда яхăн копине сутнă.

*Вырăсларан Ольга ИВАНОВА куçарнă*

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Асăрхама пĕлекене пур çĕрте те тĕлĕнтермĕш кĕтет




Нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче тĕлĕнмелле интереслĕ те ырă кĕнеке кун çути курчĕ. «Воробьиный юг. Çерçи кăнтăрĕ» ятлă вăл. 1000 экземплярлă тиражпа тухнăскерĕн авторĕ – Лев Кадкин, редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Светлана Кангина. Кăларăм ятĕнченех сисрĕр ахăртнех: вăл икĕ чĕлхепе пичетленнĕ. Чăвашла куçараканĕ – Юрий Сементер. Текст вырăсла та, чăвашла та яка вуланать.

Кĕнекене çичĕ хайлав кĕнĕ: «Пăшатан хӳре», «Инкубатор чĕппи», «Çерçи кăнтăрĕ», «Упапа кăткăсем», «Ăслă кашкăр», «Тӳрлетейми йăнăш», «Кашнин хăйĕн мунчи». Мĕн пĕрлештерсе тăратьха вĕсене? Чи малтанах, тăван тавралăха юратни, унăн илемне, хăйнеевĕрлĕхне асăрхама пĕлни тата, паллах, авторпа тăлмачăн сăнарлă чĕлхи. Пуш параппан çапнă пек ан пултăр ĕнтĕ. Курăмлă тĕслĕх илсе парăпăр. «А так как каждый воробей считал только себя достойным звания вожака, то, само собой разумеется, он хотел, чтобы выбрали только его. Хотя ни один из них не имел никакого понятия, где север, а где юг. Но зато все хорошо знали, где находится колхозная конюшня, и где там стоят кормушки для лошадей», – вулатпăр «Çерçи кăнтăрĕ» юмахра.

Асăннă сыпăках чăвашла çапла янăрать: «Кашни çерçи хăйне ыттисем хушшинче чи лайăххи тесе шутланă, ертӳçĕ пулма никама та мар, хăйне суйласси пирки шухăшланă. Анчах вĕсенчен пĕри те кăнтăрпа çурçĕр ăçта вырнаçнине те тĕлленмен. Колхозăн лаша вити хăш вырăнта ларнине, сĕлĕ валашки ăçтине вара кашниех лайăх чухланă».

Çав хушăрах кашни калав-юмах мĕнпе те пулин уйрăлса тăрать, хăйне çеç тивĕçлĕ ыйтăва хускатса ăна татса памалли çул-йĕре шырама хистет. «Пăшатан хӳре» юмахри сăнарсен – йытă, кушак тата шăши – тыткаларăшĕпе кăмăлне тĕрĕс те ăста уçса парать çыравçă. Ниепле те пĕр чĕлхе тупаймаççĕ-çке-ха вĕсем. Ĕмĕрхи вăйăа тăсаççĕ: кушакĕ шăши хыççăн вирхĕнет, йытти вара мăрмăра тустарасшăн. Шăши пĕчĕк пулин те, вăр-вар, хăйне пурăнмалăх ăсĕ те çителĕклĕ унăн. Çĕнĕ юр çиййĕн хăй чи малтан йĕр хывнине этеме çав тери пĕлтерес килсен те шарламасть вăл. «...шăпи çапла куçа курăнмасăр пурăнмалла тунă та – çырлахмах тивет ĕнтĕ», – тет вĕтĕркке.

Ачасем, сирĕн шутпа, чи чее чĕр чун тилĕ-и? Эпĕ те ку таранччен çапла шухăшланă. Çук, иккен, унран чеерехехи те пур. Мĕн-ши тетĕр ахăртнех. Эсир, тен, ĕненмĕр те, анчах вăл – Инкубатор чĕппи. Тилĕ тяппине çакланнăскер ун тыткăнĕнчен хăтăлса тухать кăна та мар, кĕлте хӳреллин сехрине самаях хăпартать. Мĕнле майпа-ши? Пĕтĕм вăрттăнлăха уçса памăп ĕнтĕ. Ку ыйту хуравне «Инкубатор чĕппи» юмахра шырăр. Çула май тепĕр ыйтăва та татса пама пултаратăр. Упаран вăйлăрах чĕр чунсем те пур тет. Камсем е мĕнсемши вĕсем? Чи тавçăруллисемпе маттуррисем çеç пĕлеççĕ куна. Тантăшăмăрсем, эсир шăпах çавăн пек ачасем вĕт-ха.

«Ăслă кашкăр» юмах жанрĕпе ытларах ытарлă халап (притча) енне туртăнать-тĕр. Пурнăç курнă ватă кашкăрпа каппайчăк çамрăк ертӳçĕ сăнарĕсем урлă вулакан патне пĕтĕмлетӳллĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ шухăш çитерет автор. Ăна ăслă кашкăр сăмахĕсенче вулаятпăр: «Çĕнтерӳ тени вăл çĕнтернĕ çĕрте кăна мар. Тепĕр чухне ăслăн каялла чакнине те çĕнтерӳ теме пулать. Ертӳçĕ пирки калас тăк, унăн тивĕçĕ хăйĕн вăйне кăтартассинче мар, куçа курăнман чăрмава чунĕпе туйса илессинче».

«Тӳрлетейми йăнăш» калав çивĕч ыйтусем хускатать: çыннăн хăйне çут çанталăк патши пек тытма ирĕк пур-и, самантлăх киленӳшĕн вĕçен кайăкпа чĕрчун тĕнчине сăтăр кӳнине каçарма пулать-и, ирĕклĕх тени этемшĕн кăна хаклă-и, пур йăнăша та тӳрлетме пулать-и?.. Шухăша яракан, чĕрене ыраттаракан самантсем те пайтах ку хайлавра.

«Кашнин хăйĕн мунчи» калав кайăксен пурнăçне тишкерӳллĕн пăхма, тимлĕ пулма, сăнама вĕрентет. Курма тата вак-тĕвекре те пысăк пĕлтерĕш асăрхама пĕлекене вара пур çĕрте те тĕлĕнтермĕш кĕтет.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

# Манăн савни салтакра шăши кĕтĕвĕ кĕтет...

Ăнсăртран лекрĕм Анук аппасем патне. Аннепе-атте ĕçе, пиччесемпе аппасем шкула кайрĕç те ирĕксĕрех хамăртан ултă кил урлă пурăнакан Ивановсене кайса ячĕç. Эх, çын патĕнче ларма юратмастăп та... Ним тума çук-çке. Асанне хĕрĕ патне хăнана кайман пулсан килтех рехетленнĕ пулăттăм. Халĕ авă тунсăх...

– Капла кунĕпе кичем сана, ак кунта мĕн тĕрлĕ кĕнеке çук. Йăлтах мăнуксен. Атя, паллаш унти сăнарсемпе, – тесе шкапри пĕчĕк хутаçа сĕтел çине хучĕ.

Анук аппа та ахаль ларас темерĕ, тĕрлеме ларчĕ. Шăп çак вăхăтра унăн телефонĕ шăнкăртатрĕ. Тăванĕ пулас, тем çинчен те калаçрĕç. Унтан хавассăн çеç:

– Çăварни çинчен сăвă-юрă пĕлместĕп-и? Ан калаç! Акă итле! – терĕ те усă сассипе янăраттарса сăвă каларĕ.

Çăварни, çăварни!
Катаччи, катаччи!
Кам ир тăнă –
Çуллă икерчĕ.
Çăварни, çăварни!
Катаччи, катаччи!
Кам ир тăман –
Кĕл пашалу.

...Тĕлĕнмелле! Анук аппа чăн-чăн артистка! Кĕнекесем çинчен мансах:

– Анук аппа, эп паян ирех тăнă. Мана çуллă икерчĕ çитерĕн-ши? – терĕм хăюлăх çитерсе.

Вăл кулса ячĕ, мана ыталаса илчĕ.

– Сана валли тата та тутлине пĕçернĕ эпĕ, – тесе ман ума тутлă шăршăллă икерчĕ килсе хучĕ.

– И çăварни, çăварни!
Çăвар тулли икерчи,
Картлă-картлă пашалу,
Карчĕ тăрăх çу юхать! – терĕ хăпартланса.

Нимĕн те ăнланмастăп. Ара, çăварни эрни иртрĕ тесе асанне каланине илтнĕччĕ, Анук аппа мĕншĕн халь тин паллă тăвать-ши çак уява?

– Ара, икерчине кашни кун пĕçеретĕп эпĕ. Çăварни эрнинчи пекех туятăп вара хама, – ăнлантарчĕ хайхискер.

Унтан урăх шўтлĕ сăвăсем шăрантарма тытăнчĕ вăл.



Леш айккипе кайрăмăр та
Ку айккипе килтĕмĕр.
Эпир савса килтĕмĕр
Эсир савса чĕнтĕр-и?



Ташлассăм килет,
Юрлассăм килет.
Купăс калакан каччине
Юратассăм килет.



Манăн савни салтакра
Шăши кĕтĕвĕ кĕтет.
Пĕр шăшине утланса
Мана курма килет тет.



Юман йывăç питĕ хытă
Касса турпас тухмарĕ.
Кўршĕ ачи питĕ хытă
Ыйтса укçа памарĕ.

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

# Маттур сысна

Урамран юрланă сасă илтĕнсе кайрĕ. «Çтаппан салтака кайма хатĕрленет, юрласа çўрет», – терĕ амăшĕ Верука. Хĕрача нумай шухăшласа тăмарĕ, урама тухса вĕçрĕ. Ун пек чухне ача-пăчана питĕ интереслĕ. Юрласа çўрекенсем хыççăн вĕсем хавассăн чупкалаççĕ. Аслăраххисем салтака каякан ачана хĕрхенеççĕ, ăна мĕнле йывăрлăхсем кĕтнине ăнланаççĕ. Тăванĕсем, кўршисем киле кĕртсе хăналама васкаççĕ. Ачана салтака ăсатма нумайăшăн пуçтаранă. Ашшĕ, амăшĕ, тăванĕсем куççуль шăлса тăратчĕç. Салтак ачи сывлăша черккине ывăтатчĕ. «Вансассăн – япăха», – тетчĕç ваттисем. Анчах киле пурте йĕркеллĕ тавранă.

Верук урамра Надюка сăнарĕ, ун патне утрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр класра вĕренеççĕ, туслă пурăнаççĕ. Хĕрачасем юрлакан çамрăксенчен вăтанчĕç, çавăнпа ваçça пичче хапхи умне кайса ларчĕç, яшсене айккинчен сăнарĕç.

Маруç аппан сысни юрлакансемпе ăмăртса çухăрчĕ. Картише кĕресшĕнсксер хапхана сăмсипе тăрăшса хытăн хирчĕ. Ак тамаша! Хапха уçăлчĕ те сысна картише кĕме васкарĕ.

Юрлакансем Маруç аппан çурчĕ патне çывхарчĕç, усă хапхине сăнарĕç, хăйсене кĕтеççĕ тесе шухăшларĕç. Хапхана сысна уçни çинчен кăшкăрчĕç-ха хĕрачасем, анчах купăс сассипе пула вĕсене никам та илтмерĕ.

Хĕрачине валли кĕпе çĕлесе паракан Маруç аппа кĕтмен хăнасене курсан хăраса кайрĕ, сиксе тăчĕ те пĕр хушă нимĕн тума аптăрарĕ. Ăнланса илсен пуçларĕ чупкалама, сĕтел çине апат-çимĕç лартма. Аван мар лару-тăрăва лекнине çамрăксем те ăнланса илчĕç. Çтаппан каçару ыйтма тытăнчĕ. Маруç аппа сăра ĕçтернĕ хыççăн салтака каякан ачана алшăлли пачĕ, нумай ăшă сăмах каларĕ.

Маруç аппа каччăсене крыльцаран ăсатса янине курсан хĕр ачасем шăпланчĕç. Çтаппан юрласа, алшăллийĕсене сулласа çухалчĕ тепĕр урамра. «Маттур сысна, салтак ачине хăналарĕ!» – терĕ Надюк.

*Галина ПЕТРОВА.*

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Пăши шыраса

Кĕлетре кĕнеке тупрăм. Çĕнĕ мар паллах. Страницисем сарăхнă. Ăна пӳрте илсе кĕтĕм те кăмака çумĕнчи тенкел çине вырнаçрăм. Чим-ха, мĕн тĕрлĕ ӳкерчĕк çук унта! Пĕрисем сăртран çунашкапа ярăнаççĕ авă. Асламăшĕпе мăнукĕ кĕтӳре çӳренине те сăнласа кăтартнă. Страницисене уçсан-уçсан уйрăмах килĕшекен ӳкерчĕке курах кайрăм. Чим, мĕн ку? Ĕне-и? Мĕншĕн мăйракисем çук? Пирĕн Маруçăн вĕсем пур-çке. Ялан кӳршĕсен Таруçĕпе сĕкĕшет. Вăйне ниçта хураймасть пулас. Пĕр чăх чĕппине таптаса амантрĕ тата! Çакăн хыççăн хисеплеми пултăм ăна. Сĕт ĕçме те Таис аппа патне каякан пултăм.

Кĕтӳ аннă чухне пӳрте кĕрсе тарма пуçларăм. Чӳречерен пăхса ларатăп çапла. Маруçа картана хупсанах урама чупса тухатăп. Аннене ĕнене улăштармалла пирки миçе хутчен асăрхаттартăм ĕнтĕ, итлемест. Мĕншĕн? Пĕлместĕп.

Умри ӳкерчĕке пăхса ларнă май шухăша путрăм.

– Çывăрса каймарăн пулĕ те эсĕ? – терĕ аппа хулпуççинчен тытнă май.

Шартах сикрĕм. Чĕресĕр хăварать вĕт!

– Аппа, çакă мĕнле выльăх-ши? – кăсăклантăм кĕнекене ун еннелле тăсса.

– Пăши вăл, вăрманта пурăнаканскер, – ăнлантарчĕ самантрах.

– Ан суй! Ĕне вăл! Çырла-кăмпара асаннепе пĕрре мар çӳренĕ, анчах кун пеккине пĕрре те курман! – хăпартрăм сасса самантрах.

– Ха, куштан, симĕс шăрчăк пекех сикет тата, – тесе хайхискер картишелле тухса кайрĕ.

...Канăçа йăлт сухатрăм. Пӳрт умĕнчи хăма купи çинче чылайччен урасене сулласа лартăм. Кайран никама пĕр сăмах каламасăр вăрманалла чуптартăм. Кĕсьене çăкăр чикме манмарăм паллах. Тутлă кучченеçпе çĕнĕ ĕнене илĕртсе килме çăмăлтарах вĕт. Енчен те итлемесен? Хулă та хатĕрлерĕм. Ялалла хăваласа кĕрсен кайран килтисем пулăшĕç. Вара анне ирĕксĕрех Маруçа сутса ярĕ. Çӳретĕр ют ялта мăйракисене каçăртса. Эпĕ хам авă мăйракасăррисене кăмăллатăп.

Ларатăп тунката çинче ун-кун пăххаласа. Унччен те пулмарĕ – çывăхра темле сасă илтĕнчĕ.

– Ме-ме! Кил кунта! – тесе хыттăн кăшкăртăм.

Тамаша! Манăн ума Кĕтерне аппа тухса тăчĕ.

– Эпĕ выльăх мар, çын! Урăхран санран ун пеккине илтем мар, – мăкăртатрĕ кинеми ман еннелле шурă куçĕсемпе пăхса.

Эпĕ хайхи вăрман ĕни тесе... Каçару ыйтрăм унран, анчах хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Мăкăртатса сукмакпа малалла уттарчĕ.



© Юля КУЗЬМИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

– Шит тăршшĕ те ӳсмен, çапах çынран кулма ăста. Каснă-лартнă кукашшĕ, – илтĕнчĕ аякран сасă.

Кукаçишĕн те эпĕ айăпли пулса юлтăм тата. Ку таранччен никама та кӳрентерменччĕ. Ара, паян ăнсăртран пулса тухрĕçке. Мучисемпе кинемисене кӳрентерме мар, яланах пулăшатăп та çав. Урай çуса паратăп, чăххи-чĕпписене апатлантаратăп... Кĕтерне аппа ахалех çапла каларĕ. Чун хурланчĕ паллах.

Çурăмран такам чĕпĕтрĕ. Шари! Кăшкăрса ятăм. Кинеми çапла хăтланать тесе. Çаврăнтăм – никам та çук. Мĕн амакĕ пулчĕ-ши ку? Çывăхра сăпсасем нăйăлтатса вĕçнине курсан – тин ăнлантăм. Вĕсенчен пĕри сăхнă мана. Мĕншĕн-ши, чиперех лараттăм-çке. Çурăм ыратнине ирттерес тесе алăпа сăтăркаларăм. Ыратăва чăтрăм, куççуль кăлармарăм.

Каппла пĕр вырăнта ларнипе ĕне тупас çук. Вара васкамасăр малалла уттартăм. Кĕçех çил тухрĕ. Йывăçсем кашлама тытăнчĕç. Хăранăран хурăн айне пытантăм. Çилпе вĕçсе каясран шиклесе унăн вуллисене пĕчĕк аллăмсемпе çатăрласа тытрăм. Çумăр çума тытăнчĕ. Йĕп-йĕпе пултăм.

Ирĕксĕрех, ниме пăхмасăр килелле вĕçтертĕм пылчăк тăрăх. Çенĕк картлашки çинче ларакан асанне мана курсан куçне чарсах пăрахрĕ.

– Ачам, ăçта çӳретĕн капла? Саншăн пăшăрханса чĕре çурăлса тухатчĕ, тупата, – терĕ те мана, шăннăскере, хăй çумне пăчăртарĕ.

Хам мĕн ĕмĕтпе вăрман тăрăх çӳренине пĕлсен пĕççине шарт! çапрĕ.

– Пăшисене çынсем усрамаççĕ. Вĕсем ирĕклĕхе юратаççĕ. Вăрман – вĕсен юратнă килĕ, – ăнлантарчĕ асанне манăн çӳçе алшăллипе типĕтнĕ май.

– Атя эпир илсе килетпĕр, тен, хăнăхĕ вĕсенчен пĕри. Ун валли вите те пур. Атте ăсталани. Ăшă вырăнтан тухса тармĕ ĕнтĕ. Вара Маруçа сутăпăр, – пĕр сывлайми калаçрăм çапла.

– Ан аташ. Ĕнене мĕншĕн кураймастăн эсĕ? Вăл пулмасан епле пурăнăпăр? Сĕт-çу, тăпăрчă та пулмĕ вара. Мĕн çисе пурăнас тетĕн? – пӳлчĕ мана сасартăк асанне.

Тĕрĕс калать-ха вăл... Ĕнтĕ Таис аппан Хурамкки сĕт памасть халĕ. Маруçăннех ĕçме тивет. Ялан чĕп таптамĕ ĕнтĕ вăл. Каçармалла пулать ăна.

Пурте çывăрма выртрĕç. Эпĕ çаплипех сĕтел хушшинче ларатăп. Килĕшекен ӳкерчĕке тинкерсе. Мăйракасăр ĕнене киле илсе килме май çук терĕç те, кăмăл хуçăлчĕ. Питĕ шел. Апла эпĕ ахалех çумăр айне пултăм, шăнса çӳрерĕм вăрманта. Ахалех пулчĕ апла, ахалех...

# Урамра савăнас килет те...

Хальлĕхе пĕчĕк эпĕ. Виççĕ тултарса тăватта пусрăм. Хам тĕллĕн ним тума та çук. Аслисем:

– Ăна ан тыт! Ун патне ан пыр! Сĕтел хушшинче урусене сулласа ан лар! – тесе асăрхаттарса çеç тăраççĕ.

Э-э! Тепĕр чух вĕсем мĕн каланине хăлхана та чикместĕп. Ара, ялан пĕр вырăнта ларма пултараймастăп-çке эпĕ. Чирлĕ мар вĕт!

Картишре аннепе аппасем хĕрсех тем пирки пуплеççĕ. Çак самантпа усă курса хапха айĕнчен урамалла тухса тартăм. Колонка умĕнче пы-ы-ысăк хуран тĕлĕнче вара тăпах чарăнтăм. Ара, аппа кунта шăп ялала чӳхет иккен. Хăй вара аслисемпе тан халап çапать.

Мана çакă кирлĕ те... Пуçăнтăм хĕрӳ ĕçе. Савăта пĕчĕк витрепе хăйăр тултарма тытăнтăм. Пиллĕк хутларăм хуран тĕлне. Юлашкинчен, пĕшкĕннĕ чухне кĕсьерен шыва канфет тухса ӳкрĕ. Ăна илес тесе алла тăсрăм çеç шăмпăр-р-р! кĕрсе ӳкрĕм хурана.

– А-а-а-а! – тесе хăранипе кăшкăрса ятăм.



© Аня ПЛАТОНОВА (Элĕк районĕ, Элĕк шкулĕ) ӳкерчĕкĕ.

Çăвара шыв кĕнĕрен чыхăнса кайрăм. Акă килтисем пурте ман пата чупса пычĕç те самантрах хурантан туртса кăларчĕç.

– Çак ачана чиркӳре шыва кĕртмелле тесе пĕрре мар асăрхаттартăм ĕнтĕ. Итлеместĕр-çке. Ара, унашкал ачасене Турă сыхлаймасть. Акă халĕ тĕпренчĕкӳпе инкек сиксе тухнă пулсан? – терĕ Таис аппа аннене асăрхаттарса.

– Сăмахусем тĕрĕсех-ха, анчах ниепле те ерçейместпĕр-çке, – пулчĕ кĕске хурав.

Çак пулăм хыççăн тепĕр кунне аслă аппа тенкел çине лартрĕ те ăс пама тытăнчĕ.

– Малашне те çапла хăтлансан кунĕпех кĕтессе хупса хурăп. Суймасăр калатăп. Мĕн, ĕненместĕн-им? – терĕ ман çине шăтарасла пăхнă май.

Йĕркеллĕ калаçма пĕлейместĕп те, хирĕç нимĕн те калаймарăм. Вара вăл мана йăтса пахчана тухрĕ. Унта пурте тар кăларса çĕр улми кăлараççĕ. Аппа мана витре çумне лартса хăварчĕ те хăй вăл хуракансем патне васкарĕ.

Тунсăх! Аслисем сисиччен лаççа васкарăм. Унта асанне хуранпа яшка пĕçерет иккен. Ăна питĕ пулăшас килчĕ.

Çӳлĕк çинчен хăсат илтĕм те ăна вучаха пăрахма шухăшларăм. Хута çулăм самантрах тивсе илнĕрен алла пĕçертсе ятăм.

– А-а-а! – кăшкăртăм каллех сехре хăпнăран.

Çĕрулми кăлараканисем чупса çитрĕç. Ыратакан алла тӳрех сивĕ шыва чикрĕç.

– Чĕкеç, ачуна хăçан шыва кĕртетĕр? Тупата, хăвăрсăрах çак ĕçе пурнăçлатăп-и-ха? – пырса тăчĕ Таис аппа.

Пӳрте йăтса кĕчĕç мана. Кантрапа уraran сыхрĕç те сĕтел уринчен кăкарса хучĕç.

– Ăнт, лар çапла кунĕпе. Сана пула пĕр ĕçе те йĕркеллĕ пурнăçлаймастпăр-çке, – мăкăртатрĕ кинемей пек.

Пĕчченех юлтăм. Тăрса утас килет те – пултараймастăп. Питех те йăлăхрăм çапла ларса. Хушăран аппа кĕрсе пăхни çеç чуна лăплантарать.

Акă ман еннелле кушак çури килет. Шурă тĕслĕскер кĕçех алла лекрĕ. Тытăнтăм хайхискре лăскама! Хăлхинчен, хӳринчен туртрăм. Чĕпĕтрĕм те – çухăрса ячĕ. Муркăна çакă килĕшмерĕ курăнать, сасартăках аларан чавса илчĕ.

– А-а-а! – çухăрса ятăм каллех.

Аппа хашкаса çитрĕ, унтан ыттисем те юлмарĕç. Пӳрнерен юн юхать иккен. Ăна анне бинтпа шăлчĕ те эмеллесе ячĕ.

– Лисука ыран чиркĕве илсе кайăпăр. Ун çумне урăх усалĕсем ан çулăхчăр. Ара, кашни кун хăйне валли тем амакĕ тупать, – терĕ анне кăштахран.

...Кантăк умĕнче ларатăп. Урамра авă лӳшкесе çумăр çăвать. Ах, çарран шыв кӳлленчĕкĕ тăрăх чупас килет, çĕр çине тухса выртнă ăмансене чăхсем валли пуçтарас килет те... Эх, çумăр айĕнче питĕ çӳрес кăмăл пысăк, анчах юрамасть! Кăмака çумĕнчи диван çинче кĕнеке вуласа ларакан аппа ирĕк парас çук.

Юнашар кушак пырса вырнаçрĕ. Ман еннелле пăхса мяук! терĕ ачашшăн. Ахăртнех вăл та урама тухасшăн, тин çеç шăмă кăшланăскерĕн, тен, шыв ĕçес килет? Чăн та, хайхискер урайне чалт! сикрĕ те алăк патне пычĕ. Аппа ăна алăк уçса кăларса ячĕ. Эпĕ те савăнса унта чупса пытăм та алăк хăлăпĕ еннелле кармашрăм.

– Юрамасть! – терĕ те хайхискер.

Мана йăтса каялла чӳрече умнее кайса лартрĕ. Ах, эпĕ питĕ: «Юрамасть!» – сăмаха юратмастăп...

Тантăш 11
8 №, 2015, февраль, 26

Куçма ТУРХАН

# Çӳллĕ иккен Хусан хӳмисем

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 2014 çулхи 50–52-мĕш, 2015 çулхи 1–7-мĕш номерсенче).**



Михаил Воротынский воеводăпа Басманов окольниче крепоçе Поганăй текен кӳлĕ енчен, Хилков княçа Кайбицки хапхи енчен, Курбский княçа Елабуга хапхи тĕлĕнчен, Проскуров няçа Тезички текен тип çырма тăрăх. Плещеев княçа Тюмень хапхи енчен пырса тапăнма хушрĕç. Ку полксемпе отрядсене ертсе пыма тĕп воеводăсемсĕр пуçне ытти воеводăсене те нумай уйăрчĕç. Хальхинче кунта Ту енче чылай аякра тăракан Шигалейшĕн те ĕç тупăнчĕ. Вĕсене, Мстиславскипе иккĕшне, касимовецсемпе пĕрле хĕвел анăç енчен тапăнса кĕме каласа хучĕç. Патша хăйне валли чи лайăх ратниксене çирĕм пин çынна яхăн хăварчĕ.

Тĕттĕм пулас умĕн аслă князь патне юлашки икĕ эрне хушшинче ялан розмыселсемпе ĕçленĕ Алексей Адашев пычĕ. Вăл крепость хӳмине сирпĕтме икĕ çĕрте те йăлтах хатĕрленсе çитни çинчен пĕлтерчĕ.

– Вăхăтсăр хыпар тумасна, Алексей Федорович? Хатĕрленсе çитнĕ-и вара? – ыйтмасăр чăтаймарĕ никамах та шанса пĕтереймен государь.

– Пĕтĕмпе хатĕр, аслă князь. Иван Григорьевич Вородковпа тар миххисем патне кĕрсех тĕрĕслерĕмĕр.

– Нимле пăтăрмах та пулмасть-и?

– Пулмасть, аслă князь. Пĕтĕм ĕçе ăста розмыселсем ертсе пычĕç. Тата хам та куç илмесĕр пăхса тăтăм.

– Йăнăш пулсан асту, Алексей Федорович! вара мана ан ӳпкеле.

– Йăнăш пулмасть, аслă князь.

– Сирпĕтнĕ вăхăтра ху ниçта та ан пăрăн, окольничий! Мана пурин çинчен те малтанах пĕлтерсе тăр. Юрать-и?

– Юрать, аслă князь. Розмыселсем те пурте унта пулаççĕ, – шантарчĕ Адашев.

Вăл каç воинсенчен канаканни сахал пулчĕ, нумайăшсем пачах куç хупмарĕç. Çур çĕр иртни икĕ сехет тенĕ чухне пурте – воеводăсенчен пуçласа обозри юлашки çын таран – хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç. Вăхăт майĕпен шурĕ. Ратниксем сивĕ çил вĕрнипе сиксе чĕтрерĕç.

Посад хыçĕнчен кĕрхи хĕвел çĕкленчĕ. Пуç тăррипе кăнтăралла васкакан кайăк хурсем карталанса иртрĕç. Шăп çав самантра, кайăк хурсене хăратма çĕршер тупăран пĕр харăс персе янă пек, таврара çĕр кисренчĕ, çӳлелле тем çӳллĕш тĕтĕмпе çулăм явкаланса хăпарчĕç. Шартах сиксе ӳкнĕ воинсем пуçĕсене çĕрелле пĕкрĕç. Тепре пăхсан вĕсем хăрушă япала курчĕç: тӳперен, кайăк хурсем вĕçсе иртнĕ тĕлтен, хула çине тем пысăкăш çĕр муклашкисем, чул татăкĕсем, пĕрене сыпăкĕсем, çынсем йăтăнса анаççĕ. Тĕлĕнсе пăхса выртакан ратниксем пĕр вăхăт хушши вырăнтан та тапранмарĕç, унтан, ку мĕне пĕлтернине ăнланса, ура çине сиксе тăчĕç, никам команда парассине кĕтмесĕрех крепость хӳмисем патнелле чупрĕç.

Çĕр тепĕр хутчен хыттăн кисренчĕ. Хула çийĕнче каллех тем те пĕр япала курăнчĕ. Воинсем çавăнтах крепоçелле тапăнса кĕчĕç.

Тутарсем вĕсене ним кăшкăрашмасăр, алăри хĕç-пăшалпа пĕрре пемесĕр кĕтсе илчĕç. Унтан пĕр князь «алла! алла!» тесе хуçăрса ячĕ, аскерсем урса кайнă пек вырăссем çине ыткăнчĕç. Хĕç-пăшал пурри хĕç-пăшалпа, хĕç-пăшал çукки чулпа та ахаль тимĕр таткипе, пуртăпа та сенкĕпе, чукмарпа та кӳсекпе çапăçрĕ. Аманнисем е вилме пуçланисем упаленсе те пулин тăшман патне талпăнчĕç, юлашки вăйпа та пулин вырăссене мăйран пăврĕç.

Тăшмансем пĕр-пĕрне тивĕçлĕ скерсем тĕл пулчĕç: нихăш енĕ те пĕр утăм та чакмарĕ. Йĕри-тавра хуçăк сăнăсем, авăнса пĕтнĕ хĕççсем, сулицăсем, хуçасăр юлнă чекансем, бердышсем выртрĕç, вĕсем çине çын виллисем купаланчĕç, – çапăçу хĕрӳлĕхĕ пĕрре те сӳнмерĕ.

Часах вырăссем патне патша янă çĕнĕ вăй çитрĕ – çапăçма лайăх вĕрентнĕ стрелецсемпе пищальниксем килсе тухрĕç. Тутарсене пĕчĕккĕн каялла хĕстерсе пыма тытăнчĕç. Çуран çар отрячĕсемпе çарта тăман ахаль çынсем посада кĕрсе кайрĕç, вĕсем пур çĕрте те хула халăхне çаратма пикенчĕç.

Едигер хăйĕн воинĕсемпе пĕрле çапăçма тухмарĕ. Вăл мĕн иртенпех хан керменĕнче питĕрĕнсе ларчĕ. Ун патне вырăссем кермен алăкĕсене çĕмĕрсе пырса кĕчĕç. Хан пĕр сăмахсăр тыткăна парăнчĕ.

Анчах Едигера тыткăна илнипе çапăçу пĕтмерĕ-ха. Тутар воинĕсенчен чи хастартараххисем – вунă пин çын – тăшман аллине çакланасшăн пулмасăр, кремлĕн Казанка енчи хапхисем патне чакса пычĕç. Башня çине хăпарса кайнă вырăссем усăсăр юн тăкмашкăн пăрахма хушсан вĕсем? «Тархасшăн, эсир пирĕн хана илме пултаратăр. Пире нимĕн те ан сĕнĕр, эпир сирĕнпе юлашки хут çапăçăва кĕретпĕр», – тесе çеç тавăрчĕç.

Воинсем вырăссен куçĕ умĕнчех хӳме урлă сикрĕç. Казанка патне чупса анчĕç. Хăрах алăпа хĕç-пăшал тытса, тепринпе ишсе çырма урлă каçрĕç те çыран ик енне те нумай çын пăрахса хăварса путлăхлă вырăнсемпе вăрмана кĕрсе çухалчĕç. Вĕсене тӳрех хăвалама май килмерĕ. Утлă çар отрячĕсене тутарсен çулне пӳлме аякран çаврăнса кайма хушрĕç. Микулинскипе Шереметев тата Глинский воеводăсем тутарсене вăрман айккипе кайса хăваласа çитрĕç.

Паттăр воинсенчен пĕри те тарса хăтăлаймарĕ. Юлашки аскер юлашки ухă йĕппине вырăссен еннелле вăркăнтарчĕ, вара тăван хула çине тунсăхлăн пăхса илсе çĕре йăванчĕ.

Хусан вырăссен аллинче пулчĕ ĕнтĕ, анчах вăл çав-çавах парăнмарĕ-ха. Урам тăваткăлĕсенче, тăкăрлăксенче, кĕперсем патĕнче унта та кунта çапăçу пычĕ. Урам ик айккипе иртсе çӳреме сарса тухнă чул пур çĕрте те юнпа хĕрелчĕ.

Çын виллисенчен юри тасатнă вырăнпа хулана аслă князь чыслăн пырса кĕчĕ. Ун умĕнче çапăçура чапа тухнă воеводăсемпе боярсен ачисем, патша хыçĕнче Владимир Воротынскипе Шигалей пычĕç.

Аслă князь свити питĕ чаплăччĕ, анчах ăна никам та саламламарĕ. Урам пуш-пушă пулчĕ. Чылай аякка кайсан çеç пĕр çĕрте аслă княçпа ун воеводисене тыткăнран хăтарнă вырăс çыннисем пуç тайса кĕтсе илчĕç. Патша вĕсене вырăссен станне илсе тухма, лайăх тăрантарса килĕсене ăсатма хушрĕ.

Хула курса килсен аслă князь воеводăсемпе тепĕр хут кремле кĕчĕ. Ун патне хан керменĕнчен Едигера, ун ялавĕсене илсе тухрĕç.

– Сан çулу каллех Мускавалла выртать, Мухаммед Касымов Едигер, – терĕ государь хăйĕн умне пырса тăнă яштака тутар çине шătарасла пăхса. – Мускав вăл сан пек тăлăх патша ачисене нумай йышăннă, халĕ те йышăнать. Ан хăра, пирĕн сире тăрантармалăх çăкăр-тăвар тупăнать унта...

Едигер вăл хăйне вăрçса тата мĕн те пулин каласса кĕтрĕ, унтан аслă князь тек шарлас çуккине сиссе утне утланчĕ.

– Лайăх çапăçрĕç тутарсем. Христос тĕнне ĕненмеççĕ ĕнтĕ, анчах пурĕ пĕр пирĕн пек этемехçке вĕсем, – Едигершĕн мар, хăйĕн çыннисемшĕн каласа хучĕ Иван Васильевич.

Кремельти çуртсем, ун картишĕнчи мĕн пур пек хуралтăсем аслă княçпа воеводăсем тухса кайсан та пушанса юлмарĕç. Халь ĕнтĕ вĕсенче патша хушнă уйрăм ĕçсене тăвакан служилăй çынсем, стрелецки головасем, казаксемпе вĕсен утаманĕсем хуçа пулса тăчĕç. Вырăс канцелярийĕ вăрçă пĕтнĕ-пĕтмен хăйĕн ĕçне тытăнчĕ.

Хан мечĕтĕпе юнашар, уçă вырăнта, таçтан тупнă сăрлă сĕтелсем хушшинче лапсăркка çӳçлĕ дьяксем ларчĕç. Вĕсем тĕрлĕ çĕртен пĕчченшерĕн те, ушкăнпа та илсе пыракан çынсемпе калаçрĕç, тĕпчемеллине тĕпчерĕç, тем çырчĕç, çырчĕç.

Акă казаксем хан нӳхрепĕнчен тин çеç кăларнă таканлă е тимĕр тăлăллă çынсене йышлăн хăваласа пычĕç.

– Кусемпе мĕн тумалла? Пурне те ирĕке ямалла-и? – терĕ пĕр ватăрах казакĕ типнĕ пулă çисе ларакан мăнтăр дьяк умне сатуррăн пырса тăрса.

– Ирĕке яма ĕлкĕрĕн, – терĕ лешĕ пуллине чăмлама пăрахмасăр. – Ку çынсенчен ыйтса тĕпчес пулать – камсем вĕсем, хан нӳхрепне мĕнле çакланнă?

Вăл çисе ярайман пулă пуçне аякка ывăтса ячĕ те тӳрех ĕçе тытăнчĕ.

– Эппин, пуçлатпăр, тăвансем. Эсю, хĕрлĕ сухал, сăмахран, кам пулатăн? – терĕ дьяк ушкăнра чи малта тăракан çынна хăй патне кăсăк туртса.

– Çĕпĕр мăрси эпĕ. Катăш князь тăванĕ, – халь-халь макăрса ярас пек сăмах хушрĕ хĕрлĕ сухал урари йывăç таканне кĕмсĕртеттерсе илсе. – Мана ним айăпсăр пиччӳ хăраххи пулĕ-ха эсĕ тесе тытса хупрĕç.

– Хусана мĕн тума килтĕн? Мĕн туса çӳренĕ вăрçă вăхăтĕнче ют çĕрте?

– Эпĕ вăрçă пуçланиччен килнĕччĕ. Вара хула тулашĕнчи нухайсенчен хăраса ниепле те вăхăтра тухса каяймарăм.

– Эсĕ кам тата, унпа юнашарри? – ыйтрĕ дьяк тураман çӳçне якаткаласа тăракан тепĕр çыннинчен.

– Камай мăрса шăллĕ. Ман пиччене пĕлме тивĕç ĕнтĕ эсир, – терĕ лешĕ.

– Пĕлетпĕр, – чăртмахланса тавăрчĕ дьяк. – Пиччӳне тупма пулăшăпăр. Халь малалла иртха. Эсĕ кам пулатăн тата, старик?

– Эпĕ вырăс, – терĕ ват çын пек курăнакан тĕреклĕ этем. – Пуп эпĕ, Иван Глазатый. Тыткăна илнĕ хыççăн çирĕм çул хушши Хусанта пурăнтăм. Сафа-Гирей мана Хусан историне çыртарчĕ...

– Ăçта вăл, эс çырнă истори?

– Хан пӳлĕмĕнче пуль. Пĕлместĕп, мана кăтартман.

– Тупатпăр, – терĕ дьяк. – Вăл истори аслă княçа та кирлĕ пулма пултарать...

Пупа çавăнтах ыттисенчен уйăрчĕç, айккинерех илсе кайса тăратрĕç.

Сĕтел умĕнчи черет малалла шурĕ.

Хапха патĕнче вырăс хуралçисенчен инçе мар тепĕр ушкăн тăчĕ. Ку ушкăнра тахçанхи туссем: Ахтупай, Северьян, Ятламас, Иливан тата Ахтупай арăмĕ Эрнепи – пулчĕç. Ăна, çак çулсенче хуйхăпа пĕтсе кăн-кăвак çӳçлĕ карчăк пулнăскерне, туссем Арск улăхĕнче, тыткăнран хăтарнисен хушшинче шырса тупрĕç те яла тухса кайиччен кремль те пулин курса юлас тесе хăйсемпе пĕрле илсе килчĕç. Кремле шала кĕртмерĕç вĕсене, тутарсем вырăнне хурса пур çĕртен те хăваларĕç, тул енчен вара аякран килнĕ çынсем чылай куркаласа çӳрерĕç.

Каялла таврăнсан Муралей хапхи патĕнче вĕсен çумне кăшт хĕрĕнкĕрех дьяк çыпçăнчĕ.

– Тутарсене кунта тăма юрамасть. Мĕскер кирлĕ сире кремль таврашĕнче? – терĕ вăл юнашар иртсе кайнă чухне.

Ăна ним чĕнмесĕр ирттерсе ямаллаччĕ пуль, анчах Северьян, кăшт вырăсла перкелешсе илес шутпа-тăр, сăмах хушрĕ:

– Хамăр илнĕ хулара ма тăма юрамасть вара? Эпир уншăн юн тăкнă, халь курма та юрамасть-и? – терĕ.

– Смерд, çĕтĕк сăхман, эсĕ илтĕн пулĕ-çке ăна? – йĕкĕлтеме тăчĕ дьяк.

– Эпĕ те çапăçнă. Тен, ăна илессишĕн санран ытларах вăй хунă-ха эпир.

– Ун пек калаçма мĕнле хăятăнха эсĕ, сурханах?

– Сурханахсем илчĕç те Хусана.

– Чим, тăхта, – терĕ дьяк Северьян патне çывăхах пырса тăрса. – Эп сана таçта курнă пек, ушкуйник.

– Тен, курнă та пуль. Арск енче Япанчана аркатнă çĕрте пулнă пуль эс? Çавăнта тĕл пулнă-тăр эпир санпала...

– Астурăм! Астурăм! – кăшкăрса ячĕ дьяк таçта илтмелле. – Чулхула патĕнчи çын эс! Палецкий князь вотчининчен! Унти тиуна вĕлертĕн те таçта тухса тартăн. Тĕрĕс калатăп-и, ушкуйник?

– Эпĕ сана ĕмĕрте те курман. Ан çулăх, – терĕ Северьян хăйне палласа илнинчен самай хăраса ӳксе.

– Ну, халь лекрĕн! Эс манран ниçта та тараймастăн. Эй, стрелецсем, стрелецсем! Кунта килĕр. Кунта пĕр таркăн этем тăрать.

Çывăхри нимле стрелец та пулмарĕ. Хапха патĕнчи шалти хуралçăсем такам кăшкăрашнăшăнах чупса пыма кирлĕ мар тесе шутларĕç пулмалла. Никам та килменнине кура хĕрĕнкĕ дьяк хăйĕн çийĕнчи вăрăм ферязь аркийĕсене ик аллипе те пуçтарса илсе хапха еннелле лăпăстатрĕ.

– Ан тар, ан тар, эпĕ сана пурĕ пĕрех тытатăп! – çухăрашрĕ вăл чупнă май каялла çаврăнаçаврăна пăхса.

– Хăвăртрах тапса сик, Северьян, – терĕ юлташĕ Ахтупай. – Унсăрăн...

Северьян вăл каласа пĕтеричченех çывăхри çĕмрĕк тараса хыçне чăмрĕ, ванса, ишĕлсе пĕтнĕ канавсем тăрăх анаталла анса кайса курăнми пулчĕ.

– Эй, тамаша! Вăйăран кăштах вăкăр тухмарĕ. Вăт сана Хусан! – терĕ Ятламас ассăн сывласа ярса.

– Чăнах, куç умĕнчех тыттарса яраттăмăр çынна, эй алла!

– Вырăсла калаçма вĕрентетчĕç ăна ярса илнĕ пулсан...

– Ним мар илсе каятчĕç. Арăмĕпе ачисене те кураймастчĕ пирĕн Северьян!

Юлташĕ тарса хăтăлнăшăн пурте чунтан савăнчĕç, çавăнпа кашни мĕн те пулин каласа хума тăрăшрĕ. Эрнепи çеç нимĕн те чĕнмерĕ. Вăл, Иливан хулпуççийĕнчен уртăнса тăраканскер, вĕçĕмсĕр макăрчĕ, макăрчĕ.

***Хаклă вулаканăмăр! Эсир паллă чăваш çыравçин Куçма ТУРХАНĂН «Сĕве Атăла юхса кĕрет» историлле романăн «Çӳллĕ иккен Хусан хӳмисем» сыпăкĕпе паллашрăр. Романра автор Чăваш ен Вырăс патшалăхĕпе пĕрлешнине çутатнă. Унта писатель чăвашсен XVI ĕмĕрти пурнăçне, йăли-йĕркине кăтартса панă, чăвашпа вырăс халăхĕ хушшинчи туслăх мĕнле аталанса пынине тĕплĕн тишкернĕ.***

***Юратнă писатель Комсомольски районĕнчи Вăрманхĕрри Чурачăк ялĕнче 1915 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче çуралнă.***

# Хаваслă 2015 самант

## Сăмахкаçмăш



Владислав ПЛАТОНОВ (Шупашкар районĕ, Шоркка) хатĕрленĕ.

**Сылтăмалла:** 5. ...утар, харăс пусар, пĕрлешсе ĕçре ыр курар (Н. В. Шупуççынни). 6. Тепĕр чухне вăл чăххине те вĕрентме пултарать. 8. Сĕтел çинчи телефон ...чĕ. 11. Тĕнче уçлăхĕнче караппа вĕçекен. 12. Чикансен тапăрĕн ертӳçи. 14. Саккунсене лайăх пĕлекен специалист. 15. Ĕçре малта пыракансене ... хăми çине лартнă. 19. ... çывăх та, анчах ăна çыртаймăн. 20. Астана хулин çĕршывĕ. 22. Кашкăр – вăрман ...ĕ. 23. Ансăр мар. 24. Пӳлĕмри хурт-кăпшанкă.

**Аялалла:** 1. Венгрири кӳлĕ. 2. Сăрт-ту туризмĕн çынни. 3. Ыратмасăр ... тухмасть (ват.сăм.). 4. Спорт сооруженийĕ. 7. Раççейпе Эстони хушшинчи юханшыв. 9. Юморла произведенисем çыракан. 10. Музыкант. 13. Пакистан тĕп хули. 16. Чăваш писателĕ Валентина ... (Игнатьева). 17. Вăтам Азири сăрт-ту системи. 18. Аракспа Кура юханшывсем хушшинчи çĕршыв. 21. Ăна конверт çине çыпăçтараççĕ.

## Сан умăнта числоворд, Хăйне евĕрлĕ кроссворд.



| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 18 | 197 | 776 | 4837 | 13592 |
| 26 | 310 | 917 | 5044 | 16763 |
| 32 | 353 | 1025 | 6764 | 34311 |
| 45 | 446 | 1824 | 6973 | 43469 |
| 51 | 453 | 1945 | 7191 | 74237 |
| 57 | 534 | 2686 | 7765 | 87501 |
| 75 | 537 | 3013 | 8467 | 94501 |
| 80 | 603 | 3560 | 9317 | 95736 |
| 113 | 649 | 4564 | 9782 | |

Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.

*Çак тăваткăлта чĕрчунсем вырнаçса тухнă. Апла-тăк вĕсене шыраса тупма тăрăшăр-ха. Сăмахсем тĕрлĕрен хуçăлма пултараççĕ, горизонталь е вертикаль май.*



| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| А | Н | Н | О | А | Н | С | Ы | С |
| И | Т | И | З | Т | Л | А | А | К |
| Л | О | Б | П | О | А | Ш | Ш | А |
| А | П | Н | Ă | М | Е | Т | Т | А |
| Х | Ă | А | Л | Е | В | Ĕ | А | К |
| У | Р | Б | У | Г | З | Р | А | Ĕ |
| С | Ж | В | Й | Е | Е | Б | Е | Н |
| Ф | И | О | Л | Б | И | Ш | Ă | П |
| А | Р | Г | О | Р | О | С | О | Н |

## Унталла-кунталла



**Сылтăмалла:** 1. ... кĕперĕ. 2. Балти тинĕсĕнчи пулă. 3. Вăхăт таппи. 4. Çĕр кăпкалатмалли хатĕр. 5. Кăнтăрти çимĕç. 6. Мушкетерсенчен пĕри. 8. Авалхи грексен кĕпи. 9. Кăçалхи çул палли. 11. Унта хоккей вăййи çуралнă. 13. Карапсен пысăк ушкăнĕ. 15. Африкăри çĕршыв. 17. «Наполеон» та, «Прага» та.

**Сулахаялла:** 1. Арменири сăрт-ту. 2. Токарĕн ĕç хатĕрĕ. 3. Пулас генерал. 4. Кил йышши. 5. Казахстан çĕршывĕн тĕп хули. 7. Унран аслă пулма хушман. 10. Инди хĕрарăмĕсен тумĕ. 12. Сутуçăн ĕç хатĕрĕ. 14. Аркăсен ярăмĕ. 16. Турцин тĕп хули. 18. Патшан регалийĕ. 19. Хулпуççи урлă çакнă шинель.